Республикăн библиотеки им. М. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июль 21 ытларикун № 141 (9050)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Республикăри колхозсенче тырă вырас ĕç пуçланчĕ (1 стр.).
Тăван çĕршывра (1 стр.).
Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнусем пирки (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНАÇĔ: Н. Васильев.—Çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăхрах хатĕрленер. К. Федоров.—Хĕрÿ ĕçсем пуçланас умĕн (2 стр.).
Хаçатсен страницисем тăрăх (2 стр.).
В. Перов. — Паха апат-çимĕç продукчĕсем ытларах туса кăларар (3 стр.).
Г. Исаев, Аслан.—Ял Совечĕ пуçарнипе (3 стр.).
Петĕр Хусанкай.—Мăн çул çинче (3 стр.).
Д. Бочаров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Китай халăхĕ Маяковский 60 çул тултарнине палăртать (4 стр.).
Китайра автомобиль тăвакан пĕрремĕш завод лартаççĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республики правительствин çĕнĕвĕ пирки Отто Нушке калани (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Румынире халăх хуçалăхĕ аталанни (4 стр.).
Спорт хыпарĕсем (4 стр.).

Тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер!

Республикăри хăшпĕр колхозсенче кĕрхи тырăсене суйласа вырма тытăнчĕç. Паян-ыранах пур колхозсен уй-хирĕсенче те ырашпа кĕрхи тулă пулса ĕлкĕреççĕ, вĕсене вырса пуçтарас ĕçе массăллăн туса пыма вăхăт çитет.

Пирĕн колхозсен уй-хирĕсенче кăçал тухăçлă тырпул ÿссе çитĕнчĕ. Кĕрхи тырăсем уйрăмах пысăк тухăçлă пулассине кашни колхозрах шанса тăма майсем пур. Çавăнпа та ялхуçалăх артелĕсен тырпул склачĕсем тулли пулассипе колхозниксен ĕçкунĕсем хаклă пулассипе халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнинчен килет.

Тырпула пухса кĕртмелли вăхăт—ялхуçалăхĕнчи питĕ хĕрÿллĕ те питĕ ответлă вăхăт. Эпир çулталăк хушшинче туса пынă пĕтĕм ĕçсен ăнăçлăхне çак хĕрÿллĕ вăхăт татса парать. Ахальтен мар Сталин юлташ çапла вĕрентнĕ: «Тырпул пухса кĕртесси—вăхăтра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн—тырăллă пултăн, пухса кĕртме кая юлтăн—çухатрăн». Çапла вара, тырăллă пулас тесен, тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе пĕр кун та, пĕр сехет те кая юлма юрамасть.

Апла пулин те тырă вырма тухма чылай колхозсенче васкамаççĕ-ха. Сăмахран, Советски районĕнчи чылай колхозсенче ыраша ик-виç кун каяллах вырăнĕ-вырăнĕпе суйласа илсе вырма майсем пулнă. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Федоров юлташ: пирĕн колхоз тырă вырма тухрĕ, тесе парти райкомĕн пленумĕнче те, республикăри радио урлă та пĕлтерчĕ. Анчах чăннипе колхоз ĕнер кăна тырă вырма тытăннă. Ку районти Свердлов ячĕпе тăракан колхоз хирĕсенче те ыраш пуссисенче пулса çитнĕ вырăнсем, участоксем нумай, вырма тухмашкăн çапах кунта та васкамаççĕ-ха. Çак колхозсенче çеç мар, республикăри ытти районсенче те ыраша суйласа илсе вырмашкăн вăхăт çитнĕ. Тĕслĕхрен, Шăхасан районĕнчи чылай колхозсем ĕнер ыраша суйласа илсе вырма тытăннă. Анчах нумай колхозсенче ыраш пĕтĕм уйĕпех пулса çитессе кĕтсе пурăнаççĕ, суйласа илсе вырма тăрăшмаççĕ.

Паллă ĕнтĕ, тырпула пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхне вырмалли тата авăн çапмалли машинăсемпе тухăçлăн усă курни татса парать. Кашни комбайн, кашни молотилка тата кашни жнейка тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра 20 сехетрен кая мар, татти-сыппиcĕр ĕçлемелле. Çакна вара чылай çĕрте шута илмеççĕ. Ăна эпир комбайнсене юсас ĕç республикăри МТС-сенче начар пулса пынинчен куратпăр. Элĕк, Çĕмĕрле, Вăрмар, Тăвай, Куславкка МТС-ĕсем комбайнсене юсамалли плана çуррине ытларах çеç тултарнă. Молотилкăсене, жнейкăсене тата тырпул пухса кĕртме кирлĕ ытти машинăсене юсаса хатĕрлесси те колхозсемпе МТС-сенче питĕ çителĕксĕр пулса пырать.

Партипе правительство колхозсене çĕнĕ те паха машинăсем нумай парса пулăшаççĕ. Республикăри МТС-сем кăçал çĕнĕ те хăватлă вуншар трактор, хăй тĕллĕн çÿрекен нумай комбайнсем илчĕç. Çак пуян техникăпа перекетлĕн, тухăçлăн усă курмалла, киввисене халех юсаса çитерсе ĕçе ямалла. Вĕсемпе тирпейлĕн ĕçлеме пултаракан кадрсене тупса çитерсе, тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Техника, кадрсем,—акă мĕн татса парать халĕ тырпула вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхне. Машина-трактор станцийĕсемпе колхозсен руководителĕсен çакна яланах асра тытас пулать, техникăпа тухăçлăн усă курма кансĕрлекен мĕнпур чăрмавсене татăклăн сирсе пырас пулать.

Иртнĕ çулхи опытран курăннă тăрăх, тырра вырса пуçтарнă вăхăтра машинăсемпе агрегатсем пĕчĕк сăлтавсене пулах ĕçсĕр тăни чылай пулкалать. Горючи е сĕрмелли япаласем кÿрсе килмен пирки, вырса çапнă тырра вăхăтра пушатман, çĕмĕрĕлнĕ пайсене çийĕнчех çĕннипе улăштарма запаслă пайсем тытман пирки машинăсем ĕçлемесĕр тăнине час-часах курма пулать. Кун пек сăлтавсене пула машинăсем ахаль тăни кăçал ан пултăр тесе, кашни механизаторăн тата кашни колхозникăн тимлĕн тăрăшас пулать. Машинăсемпе тухăçлăн ĕçлес тени вăл—вĕсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермеллине, машинăпа ĕçлемелли кашни сменăри нормăна тултарса пымаллине пĕлтерет. Сменăри нормăна тултарман пĕр механизатор та ан пултăр,—акă мĕнле задача тăрать МТС-семпе колхозсенчи парторганизацисем, пĕтĕм механизаторсем умĕнче.

Малта пыракан механизаторсем кăçал та пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсем тырă вырма тухсан пирвайхи кунсенчех лайăх опыт кăтартса ĕçлĕç, пуçарулăх кăтартĕç. Вĕсен опытне анлăн сарса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать, техникăпа усă курассине лайăхлатма, ĕçе хăвăртлатмалли çĕнĕ резервсене тупса палăртма май парать. Апла пулин те чылай районсенче малта пыракан механизаторсен опытне сарас, пропагандăлас ĕçе питĕ çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртес тесен, çак ĕçе тума пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитни кирлĕ. Çав вăхăтрах республикăри чылай колхозсенче халĕ те ĕç планĕсем туса çирĕплетмен, колхозниксене кирлĕ пек вырнаçтарса тухман, витнĕ итемсене, сушилкăсене, амбарсене юсаса хатĕрлемен, михĕсем, тарасасем çителĕклĕ хатĕрлесе хуман, урапапа ытти ут таврашне типтерлесе çитермен, пĕрлешсе апатланассине организацилемен, пĕчĕк ачасем валли яслисем организацилемен. Паллах ĕнтĕ, ку пысăк çитменлĕхсене паян-ыранах пĕтерсен кăна тырпулсене хăвăрт пухса кĕртме пулать.

Колхозниксемпе механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл—тырпула тăккаласа хăварнине хирĕç кĕрешесси. Нумай вăй хурса, тимлĕн тăрăшса пăхса ÿстернĕ тырпулăн кашни пĕрчийĕ колхоз амбарне кĕтĕр. Çапла пултăр тесен, кашни ĕçе пысăк пахалăхпа туни кирлĕ. Кирек кăмăн та,—выраканĕн те, çапаканĕн те, ытти ĕçе тăваканĕн те,—тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешес пулать, харпăр хăй ĕçне тĕплĕн тăвас пулать. Кунпа пĕрлех кашни ĕçе вăхăтра, вăраха ямасăр туса пырас пулать, çавăн чухне тин тăккаланчăксем сахал пулассине шанма пулать.

Тырă вырма тухнă хыççăн малтанхи кунсенчен пуçласах государствăна тырă парас тата колхозăн вăрлăх фондне тырă хывас ĕçсене хĕрÿллĕн туса пымалла. Колхозсенче транспорт бригадисем туса йĕркелесе, вĕсен ĕçне лайăх организацилемелле. Хатĕрлев пункчĕсем пĕр чăрмавсăр, кăтартуллăн ĕçлеччĕр тесе тăрăшмалла.

Колхозсенчи парторганизацисен çак хĕрÿллĕ кунсенче пĕтĕм массăлла-политикăлла тата агитаци ĕçне уй-хире, итемсем çине куçармалла. Агитаторсем, вулавçăсем, калаçу иртгерекенсем колхозниксен ĕçри хастарлăхне çĕклесе пыма тивĕç, агитацилле-массăлла ĕçе бригадăн, колхозăн, уйрăм механизаторсемпе колхозниксен конкретлă задачисемпе тачăн çыхăнтарса пырас пулать. Паян кам ĕçре мала тухнă, кам нормăна тултарайман, мĕншĕн тултарман, кам мĕнле пуçарулăх кăтартнă? Кашни кунах колхозниксем умне çавăн пек ыйтусем тухса тăраççĕ, агитаторăн вăл ыйтусем çине тĕплĕ ответ парас пулать. Колхозсенчи парторганизацисен лайăх ĕçлекен агитаторсен опытне сарас тĕлĕшпе, стена хаçачĕсен тата боевой листоксен ĕçне йĕркелесе ярас тĕлĕшпе те тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Пирĕн республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсем кăçал та Мордва тата Мари республикисенчи ял ĕçченĕсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем çак ăмăртура мала тухассишĕн, хăйсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн, тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли плана вăхăтра тултарассишĕн, колхоза кирлĕ чухлĕ вăрлăх хывса хăварассишĕн тата ĕçкунĕ тăрăх ытларах тырпул илессишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Колхозниксен социализмла ăмăртăвне пуçарса ертсе пырасси, вĕсене хăйсен задачисене пурнăçлама куллен пулăшасси—партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен паянхи тĕп задачи.

Республикăри колхозсенче тырă вырас ĕç пуçланчĕ

Ыраш вырма тухрĕç

ШĂХАСАН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Жданов ячĕпе тăракан колхозри пур уй-хир бригадисем те ыраша суйласа илсе вырма тытăнчĕç.

«Большевик», «Герой» тата «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕсем те ыраш вырма тухрĕç.

П. ФИЛИППОВ.

* * *

СОВЕТСКИ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Хрущев ячĕпе тăракан колхозри Е. Пучковский юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади ыраш вырма пуçларĕ. Колхозниксем нумайăшĕ кулленхи нормăна 130—140 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Паян «За коммунизм», Максим Горький ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те ыраша суйласа вырма тытăнчĕç.

Я. СИГАЕВ.

Механизаторсем лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем ăнса пулнă тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тĕлĕшпе иртнĕ çулхинчен хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ.

— Эпĕ комбайнер пулса 6 çул ĕçлетĕп,—каласа парать В. Кудряшов юлташ.—Малтанхи çулсенче «Коммунар» комбайнпа, виççĕмĕш çул ĕнтĕ «С-4» комбайнпа ĕçлетĕп. Пĕлтĕр 420 гектар тырпул пухса кĕртрĕм пулсан, кăçал 500 гектар пухса кĕртме обязательство илтĕм. Агрегата тĕплĕ хатĕрлесе çитертĕм. Комбайн çумне зерноуловитель вырнаçтартăм.

МТС-ри ытти комбайнерсем те социализмла ăмăртăва активлă хутшăнчĕç. П. Федотов, Г. Огоньков, С. Эзенкин, Н. Ульянов, П. Яхатин комбайнерсем 450-шар гектар, А. Мокров, Я. Григорьев, Н. Веревкин комбайнерсем 400-шер гектар тырпул пухса кĕртме сăмах пачĕç.

«МК-1100» молотилкăпа ĕçлекен машинист И. Морозов юлташ ВКП(б) ячĕпе тăракан тата «Крестьянин» колхозсенче пĕлтĕр пурĕ 900 тонна ытла тырă çапрĕ. Кăçал Морозов юлташ 1.000 тоннăран кая мар тырă çапма обязательство илчĕ. Д. Илюшкина, А. Кирикова, В. Волков, Е. Эйков тата ытти машинистсем те пĕлтĕрхинчен хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ.

С. ИЛЬИН.



Советски районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ. Колхоз икĕ пин центнер ытла çаран ути хатĕрленĕ, 100 тонна силос хывнă, 80 гектар çинчи акнă курăксене пухса кĕртеççĕ, çулçăллă апат хатĕрлеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Свердлов ячĕпе тăракан колхозри тăваттăмĕш бригадăн утă капанĕсем.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлессине хăвăртлатмалла

КУСЛАВККА. Районти колхозсем утă çулса пухас ĕçе вăраха ячĕç. Улăх-çарансем çинчи тата акнă курăксем сарăхса хытаççĕ, вĕсен пахалăхĕ чакать.

Çарансемпе улăхсенчи ĕçсем вăраха тăсăлса пыни мĕнрен килет-ха? Райсовет исполкомĕн ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ оперативлă ертсе пыман пирки, районта утă çулма кая юлса тухрĕç. Чылай колхозсенче çак ĕçе начар йĕркеленĕ, утă çулса пуçтармалли машинăсемпе усă курмаççĕ. Районта 40 косилка, лашапа ĕçлемелли кĕрепле 60 яхăн шутланать. Анчах вĕсенчен чылайăшĕ е çĕмрĕк пирки, е машиноведсем çук пирки ĕçлемесĕр лараççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн 500 гектара яхăн улăх утипе акнă курăксем çулса пуçтармалла. Малтанхи çирĕм кун хушшинче 290 гектар çулма ĕлкĕрнĕ. Кун пек хăвăртлăхпа ĕçлес пулсан, утă çулас ĕçе вĕçлеме тата çур уйăх кирлĕ пулать. Правлени председателĕ Петров юлташпа бригадирсем артелĕн шалти вăйĕсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ.

Жданов ячĕпе тăракан колхозра пĕлтĕр утă çулас ĕçе вăраха тăсрĕç, чылай утта çулса пуçтарма ĕлкĕреймесĕр харама ячĕç. Артель правленийĕ çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман, кăçал та ĕçе начар организациленĕ.

Çакăн пек йĕрке пур: утă çулнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене, ĕçкунĕ тÿленисĕр пуçне, çулса капана хывнă утăн пĕр вуннăмĕш пайне пама юрать. Ĕçшĕн хушса тÿлени колхозниксен ĕçлес кăмăлне çĕклет, ĕçе хăвăртрах вĕçлеме пулăшать. Анчах та юлса пыракан «Ударник», «Родина» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче колхозниксене хавхалантармалли майсемпе усă курмаççĕ.

КПСС обкомĕн пленумĕ тырпул пухса кĕме тухиччен утă çулса пĕтерсе, планра кăтартнинчен 80 процентран кая мар силос хывма хушса хăварнăччĕ. Куславкка районĕнчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем обком пленумĕн çак кăтартăвне начар пурнăçлаççĕ. Июлĕн 15 мĕшĕ тĕлне силос хывмалли плана 11 процент кăна тултарнă.

Сĕтеклĕ апат — силос хатĕрлес ĕçре колхозсене машина-трактор станцийĕн пысăк пулăшу памалла. Районта силос хывмалли планăн пысăк пайĕ МТС çине тивет. Анчах та МТС руководителĕсем çак кирлĕ ĕçшĕн ответлăха туйни палăрмасть.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Стена хаçат редакторĕсемпе ялкорсен канашлăвĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Çак кунсенче КПСС райкомĕпе районти «Коммунар» хаçат редакцийĕ стена хаçат редакторĕсемпе ялкорсен канашлăвне иртгерчĕ. Канашлура КПСС райкомĕн секретарĕ И. Макаров юлташ «Стена хаçат редколлегийĕсемпе ялкорсен тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас вăхăтри задачисем çинчен» доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх 7 çын тухса каларĕ, вĕсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллашрĕç.

Канашлура пулнисем хăшпĕр колхоз правленийĕсемпе пуçламăш парторганизацисем стена хаçат редколлегийĕсене тивĕçлипе пулăшманнине, вĕсен ĕçне ертсе пыманнине кăтартса пачĕç.

— Эпир кăçал стена хаçачĕн пĕр номерĕнче колхоз председателĕ Г. Ахметов арăмĕн пĕр киревсĕр ĕçĕ çинчен карикатура туса кăлартăмăр, — терĕ «Алга» колхозри стена хаçат редакторĕ Иванова юлташ.—Çакăншăн колхоз председателĕ редколлеги членĕсене ятласа пĕтерчĕ, ун хыççăн стена хаçатне те илсе хучĕ. Çакă вăл критикăна тÿрремĕнех хĕсни пулать.

«Большевик» колхозри стена хаçат редакторĕ В. Ильметов юлташ та çакăн пек фактсем илсе кăтартрĕ, вырăнти пичет рольне ÿстерме кирли çинчен каларĕ.

Канашлура пулнисем районти хаçат редакцине стена хаçат редколлегийĕсене тимлĕрех пулăшма, вĕсен ĕçĕсем çинчен хаçатра ытларах çутатса тăма сĕнчĕç.

Агиткультбригада колхозсенче

КÿКЕÇ. Районти культура сурчĕ ялхуçалăх ĕçĕсем вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе туса пыма агиткультбригада организациленĕ. Çак бригада колхозсенче пулса лекцисемпе докладсем иртгерет, спектакльсем лартса парать.

Нумаях пулмасть бригада Иккассинчи «1-ое Мая» колхозра пулчĕ. Унта А. Федоров юлташ ялхуçалăх наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн ял ĕçченĕсем кино курчĕç. Художествăлла пултарулăх коллективĕ «Хаклă хăна» спектакль лартса пачĕ.

Ф. МАРКОВ.

Куйбышевпа Мускав хушшинчи электричество линийĕ валли

ЭЛЕКТРОСТАЛЬ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче «Стальконструкция» управленийĕн монтажникĕсем Куйбышевпа Мускав хушшинчи электричество линийĕ валли мачтăсем хатĕрлеме заказ илнĕ. Июль уйăхĕнче çав заказа пурнăçланă: Пĕтĕмпе 161 мачта пухнă.

«Стальконструкция» коллективĕ халĕ Куйбышевпа Мускав хушшинчи электричество линийĕн усă подстанцийĕсем валли тимĕр конструкцисем хатĕрлет.

Колхозсем пĕрлешрĕç

КАЛИНИНО. Çак кунсенче Ярмушка ял Совечĕн территорине кĕнĕ 4 колхоз пĕр колхоза пĕрлешрĕç. Колхозниксем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче колхоза «Гвардеец» ят пачĕç, ялхуçалăх артелĕн Уставне йышăнчĕç. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз председателĕ пулма Г. Воробьев юлташа суйларĕç.

Пуху тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

В. В. Маяковские асăнса

Июлĕн 19-мĕшĕнче пирĕн совет саманинчи чи лайăх, талантлă поэт В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарчĕ. Çак куна палăртма Мускаври М. Горький ячĕпе тăракан культурăпа кану паркĕн Зеленăй театрне 10 пин çын ытла пухăннă.

Вечера СССР совет писателĕсен Союзĕн генеральнăй секретарĕ А. Сурков уçнă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче В. В. Маяковский поэзийĕ нихçан та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатас çукки çинчен каланă.

Вечерта Л. Никулин писатель В. В. Маяковский поэт çинчен кĕске сăмах каланă. Унтан Мускаври, Ленинградри, тăванла союзлă республикăсенчи поэтсем тухса каланă.

Пухăва пынисем В. В. Маяковскин аппăшне тата тусне—Людмила Владимировна Маяковскаяна ăшă кăмăлпа саламланă.

Вечерта Н. Асеев, В. Саянов, К. Сейтлиев, О. Берггольц, Р. Рза, Г. Эмин, Н. Горизо, И. Тарба, А. Файзи, С. Кирсанов тата ыттисем те сăмах тухса каланă.

Унтан В. В. Маяковскин сăвvisемпе поэмисене вуласа панă.

Поэта асăнса çавăн пек Сокольникăри, Измайловăри, Останкинăри паркcенче, Мускаври ытти садсенче литература вечерĕсем иртгернĕ.

* * *

Мускавра, Союзсен çуртĕн Колоннăллă залĕнче июлĕн 18-мĕшĕнче В. В. Маяковские асăнса савăнăçлă лару иртгернĕ.

Ларăва СССР писателĕсен Союзĕн генеральнăй секретарĕн заместителĕ К. Симонов уçнă.

Филологи наукисен докторĕ, профессор В. Перцов доклад туса панă. Вăл хăйĕн докладĕнче В. В. Маяковский пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă.

* * *

В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа Ленинградра, Киевра, Ашхабадра, Таллинра тата çĕршыври ытти хуласенче те вечерсем пулнă. (ТАСС).

Тутар АССР столици—Хусан çĕршыври индустрипе наукăн пысăк центрĕсенчен пĕри пулса тăнă. Унăн урамĕсенче илемлĕ, нумай хутлă çуртсем туса лартаççĕ. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăхăн малтанхи икĕ çулĕнче кăна Хусанта пурăнмалли çуртсен лаптăкĕ тăваткал метра яхăн ÿснĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан площадьре çĕнĕрен туса лартнă нумай хутлă çурт.

Б. МЯСНИКОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Колхоз итемне механизациленĕ

БЕЛОРЕЧЕНСКИ (Краснодар крайĕ), июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Белореченски районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозăн уй-хирĕсенче хĕрÿ ĕç пырать. Вуншар комбайнсемпе тырă выраççĕ. Вĕсем вырса çапнă тырра итемсем çине тăташах леçсе тăраççĕ. Ялхуçалăх артелĕн итемĕ çине тырă тасатмалли çĕнĕ йышши механизмсем вырнаçтарса лартнă. Вĕсене колхозник-рационализатор Иван Прокопов туса хатĕрленĕ. Иккĕмĕш уй-хир бригадин итемĕ çинче çавăн пек механизмпа усă кураççĕ. Унта талăкне 500 тонна тырă тасатса типĕтеççĕ.

Комбайнсем çатĕнчен илсе пыракан тырра механизмсем тырă тултармалли шăтăкĕсене пушатаççĕ. Унта нÿрĕ тырă типĕ тырăран уйрăлать. Унтан вара нÿрĕ тырă типĕтмелли площадкăна каять. Тырра пухакан элеватор ăна пухса илет, тасатмалли агрегат çине хăпартать. Тасатнă тырра 16 тонна шăнăçакан бункера тултараççĕ. Унтан çав тырра автомашинăсем çине тиеççĕ.

Иртнĕ çулсенче колхозра 500 тонна тырă тасатнă çĕрте 120 çын ĕçленĕ. Халĕ çак ĕçе тăхăр çын туса пынă, вĕсенчен 4 çын тырă каяшĕсене пухнă çĕрте ĕçленĕ. И. Прокопов çак кунсенче тырă каяшĕсене пухас ĕçе те механизациленĕ. Халĕ итем çинчи каяшсене, вĕсене пухакан хатĕрпе ятарласа тунă ещĕке тиеççĕ.

Физкультурниксен уявĕ

Июлĕн 19-мĕшĕнче Мускавра хĕвеллĕ, шăрăх кун пулнă. Çĕршер пин çынсем стадионсене, парксене, спорт площадкисене, Мускав çывăхĕнчи водохранилищĕсем çине кайнă. Пур çĕрте те Пĕтĕм Союзри физкультурниксен кунне уявланă.

Спорт уявĕ «Динамо» стадионĕнче уйрăмах лайăх иртнĕ. Унта 4 сехет тĕлне 70.000 çынна яхăн пухăннă. Стадиона Китай, Корея, Япони, Вьетнам тата Таиланд çамрăкĕсем, пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конгресне кайма тухнăскерсем, Чехословакин тата Венгрин ССР Союзне хăнана килнĕ спортсменĕсем пынă. Вĕсене стадиона пухăннисем нумайччен тăвăллăн алă çупса саламланă.

Парад пуçланнă. Малта ялавсем çĕклесе пыракансен колонни иртсе пынă. Вĕсем ССР Союзĕнчи халăхсен никам аркатайми пĕрлĕхне кăтартса панă. Чи малта—РСФСР гербне ÿкернĕ ялав. Икĕ енĕпе союзлă республикăсен ялавĕсене çĕкленĕ спортсменсем пынă. Трибунăсем умĕнчен «Динамо», «Спартак», «Трудовые резервы», «Крылья Советов», «Торпедо», «Искра», «Наука», «Энергия», «Урожай» тата ытти спорт обществисен ялавĕсене çĕклесе иртнĕ.

Çĕршыври чи лайăх гимнастсем стадион çинче хăйсен ăсталăхне кăтартса панă. Унтан «Трудовые резервы» спорт обществинчи çамрăксем тухнă.

Стадионăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ пулнă.

«Торпедо» обществипе «Локомотив» обществин футбол командисем вылянă. Торпедовецсем 3:1 шутпа çĕнтернĕ.

Ытти вăйăсем енĕпе те ăмăртусем нумай пулнă.

Химкире, «Динамо» обществин шыв станцийĕнче пысăк уяв пулнă.

Пĕтĕм Союзри физкультурниксен кунĕнче çĕршыври ытти хуласенче те спорт ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăххрах хатĕрленер

Шупашкар хулинчи пуçламăш парторганизацисем коммунистсемпе комсомолецсене тата партипе тăван активне марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшаллантарас ĕçре чылай ӳсĕмсем турĕç. Çак иртнĕ вĕренӳ çулĕнче хулари коммунистсенчен 95 проценчĕ марксизм-ленинизм теорине вĕренчĕ. Кунсăр пуçне партире тăман активран 3.400 çын ытла парти вĕренĕвне хутшăнчĕ.

КПСС XIX-мĕш съезчĕ пулса иртнĕ хыççăн парторганизацисем съезд материалĕсене, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениале ĕçне вĕренессине йĕркелерĕç.

Парти хула комитечĕпе пуçламăш парторганизацисем пропагандистсен пĕлĕвне ӳстерес ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Политшкулсемпе кружоксен тата семинарсен руководителĕсене тĕтăшах лекцисем вуласа панă, вĕсем валли КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçĕ çинчен уйрăм занятисем ирттернĕ.

Политшкулсемпе кружоксенчи итогла занятисем тата марксизм-ленинизм университетĕнчи экзаменсем вĕренекенсем, пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, программăна лайăх ăнланнине кăтартса пачĕç. Марксизм-ленинизм теорине вĕреннĕ юлташсен политикăлла тавракурăмĕ чылай ӳсни палăрать.

Уйрăмах электроаппаратура заводĕнчи, Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи, пир-авăр фабрикинчи, 6-мĕш вăтам шкулти, 7-мĕш çичĕ çул вĕренмелли, институтсенчи тата ытти чылай предприятисемпе учрежденисенчи парторганизацисем тимлĕн ĕçленине палăртмалла. Асăннă организацисенчи политшкулсемпе кружоксенче занятисем йĕркеллĕ пулса пычĕç, идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртрĕç.

Акă, пир-авăр фабрикинче ĕçлекен Сисикина юлташах илер. Унăн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕ пысăк мар. Вăл шкулта тăватă çул кăна вĕреннĕ пулнă. Малтанлăха Сисикина юлташ занятисенче вăтанатчĕ, ыйтусем çине ответлессинчен пăрăнкалама та пăхатчĕ. Кружок руководителĕ Бронникова юлташ ăна вĕренӳре чылай пулăшрĕ. Çавна май Сисикина юлташ хăйĕн пĕлĕвне çине тăрса ӳстерсе пычĕ. Политикăлла пĕлĕве çине тăрса ӳстерни ăна ĕçре пысăк улшăнусем тума май пачĕ. Çак валечница халĕ—фабрикăри паллă стахановецсенчен пĕри. Сисикина юлташ рабочисем хушшинче агитациллĕ-массăлла ĕç тăвать, ытти рабочисене лайăх ĕçлеме вĕрентет. Ку тĕслĕх марксизм-ленинизм теорине вĕренни мĕнле ӳсĕмсем тума май панине лайăх кăтартса парать.

Коммунистсемпе партире тăман работниксен политикăлла пĕлĕвĕ мĕнле ӳсни çинчен ытти парторганизацисенчи тĕслĕхсемпе те çирĕплетсе пама пулать. Электроаппаратура заводĕнчи парторганизаци çумĕнче йĕркеленĕ кружоксенче вĕреннĕ Великоцкая, Дмитриева юлташсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ мĕнле ӳсе пыни çинчен, парти совет обществине çул кăтартса тата ертсе пыракан вăй пулса тăни çинчен лайăх, ăнланмалла каласа пачĕç. Çак кружокра вĕренекен Кудряшовпа Алякин юлташсем партипе государство вăрттăнлăхне мĕнле упрамалли çинчен, парти членĕн тивĕçĕсем çинчен вырăнти тĕслĕхсемпе çыхăнтарса каласа пачĕç.

Итогла занятисенче мĕнпур вĕренекенсем пурте активлăн тухса каларĕç, вĕсем программăри материалсемпе партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене ăнланса илнине кăтартрĕç. Кунти пропагандист Тарасевич юлташ вĕренӳ ĕçне лайăх йĕркелессишĕн сахал мар вăй хунă. Материала вĕренсе пынă хушăрах, пропагандист çултанăкĕпех вĕреннĕ материала мĕнле ăнланнине тĕрĕслесе тăнă. Унсăр пуçне, вăл вĕренекенсемпе уйрăмшарăн консультацисем ирттернĕ. Квалификациллĕ пулăшу кирлĕ юлташсене пропагандист КПСС хула комитечĕн библиотекинче ирттерекен лекцисене çӳреме сĕннĕ. Вĕренекенсем пропагандист калани пек туса пынă.

Çапла вара хулари парторганизацире вĕренӳ çулĕ йĕркеллĕ вĕçленчĕ. Пĕтĕмĕшле итогсем çакна кăтартса парассĕ: 425 политшкулпа кружоксем вĕренӳ планне тултарнă, итогла занятисене те вăхăтра ирттернĕ. Итогла занятисенче пулнă вĕренекенсенчен 95 проценчĕ вĕренӳ çулĕнче программăри материала ăнланса илнине кăтартса пачĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсемпе партире тăман юлташсем те хăйсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ытларах тăрăшрĕç. Чăваш АССР прокуратуринчи, ялхуçалăх тата педагогика институчĕсенчи, 11-мĕш вăтам шкулти, Чăваш АССР статуправленийĕнчи, хула Совет исполкомĕнчи коммунистсем пурте хăйсен вĕренӳ программине пурнăçланă. Çак учрежденисенчи парторганизацисенчи коммунистсем теорилле калаçусенче хăйсен пĕлĕвне аван кăтартса пачĕç.

Хулари парторганизацин активĕпе интеллигенцин политикăлла экономие вĕренес шухăшĕ-кăмăлĕ питĕ пысăк. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче ку тĕлĕшпе 19 семинар ĕçлерĕ. Семинарсенче И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне вĕреннĕ. Калас пулать, семинарла занятисем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртсе пынă. Вĕсенче уйрăм юлташсем экономикăлла ыйтусем тăрăх çырнă докладсемпе рефератсене сӳтсе явнă.

Сăмахран, ялхуçалăх институчĕн преподавателĕсем Васильева, Рыжова, Железкова юлташсем И. В. Сталин коммунизма куçмалли малтанхи виçĕ условийĕ пирки кăтартса пани çинчен, преподаватель Бопп юлташ «И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем»—коммунизм тумалли программа» ятлă тема тăрăх рефератсем çырнă. Çав рефератсене ытти вĕренекенсемпе пĕрле пăхса тухнă.

Семинарта вĕренни инженерсемпе техниксене чылай пулăшу пачĕ. Вĕсем социализмла хуçалăхри шалти резервсене тупса палăртассĕ, техникăна алла илессĕ. Сăмахран, электроаппаратура заводĕнче инженерсемпе техниксем валли икĕ семинар тунă. Çав семинарсенче социализмла промышленность предприятийĕсен экономикине вĕренессĕ. Инженерсемпе техниксем хăйсен пĕлĕвĕпе практикăра усă курассĕ.

Пропагандистсене, çавăн пекех марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене парти хула комитечĕн библиотеки пысăк пулăшу парать. Кунта партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçĕ тăрăх тĕтăшах лекцисем тата консультацисем ирттернĕ.

Парти вĕренĕвĕнче çитменлĕхсем те пулчĕç. Хăшпĕр кружоксене тĕрĕс йĕркелемен: пĕлĕвĕсем пĕр пек мар юлташсене пĕр кружокра вĕренме çырнă. Уйрăм юлташсен лекцийĕсем идея тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр пусăмра иртнĕ.

Хулари парторганизацисем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май иртнĕ çулхи йăнăшсене тĕплĕн шута илессĕ, вĕренӳ ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртассĕ. Вĕренĕве ертсе пырас тĕлĕшпе КПСС хула комитечĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем пулчĕç. Хăшпĕр пропагандистсем ĕçри ответлăха туйманни, семинарсене йĕркеллĕн çӳременни çакăнтан килсе тухрĕ ĕнтĕ.

Иртнĕ çулхи чылай йăнăшсене шута илсе, КПСС хула комитечĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнать. Халĕ пропагандистсем тупса хатĕрлетпĕр. 62 пропагандист КПСС обкомĕ çумĕнчи курсран вĕренсе тухрĕ. Сентябрь уйăхĕнче пропагандистсен семинарне пуçлатпăр. Ку семинарсенче программăри малтанхи 3 темăна вĕрентетпĕр.

Халĕ пуçламăш парторганизацисенче парти пухăвĕсем пулса иртессĕ. Пухусенче вĕренӳ çулĕн итогĕсене сӳтсе явассĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине палăртассĕ.

Эпир хальхи вăхăтра коммунистсемпе партире тăман юлташсем валли тĕтăшах лекцисем ирттеретпĕр, партипе Совет государствин шалти тата тулашри политики çинчен ăнлантарса паратпăр.

Хулари парторганизаци коммунистсемпе партире тăманнисен политикăлла тата производствăри активлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пыма тăрăшать. Эпир çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăххрах хатĕрленсе кĕтсе илĕпĕр.

Н. ВАСИЛЬЕВ,
КПСС Шупашкар хула комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.

Пионерсен лагерĕнче

СЕНТЕР. Анкă Атăл хĕрринче, Ильинкăри çичĕ çул вĕренмелли икĕ хутлă чул суртра, пионер лагерĕ уçăлнă. Кунта рабочисемпе служащисен ачисем канассĕ.

Малтанхи сменăра июнĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 12-мĕшĕччен 80 пионер канчĕ. Иккĕмĕш сменăра тата 75 ача канать.

Кунта пионерсен канăвне лайăх йĕркеленĕ. Вĕсем Атăл тăрăх кимĕсемпе ярăнассĕ, экскурсисемпе походсенче пулассĕ, çутçанталăка сăнассĕ. Нумаях пулмасть ачасем пăрахутпа Шупашкар хулине кайса, унти краеведени музейĕнче, типографинче т. ыт. çӳрсе пулчĕç.

Пионерсем час-часах тĕрлĕрен киносем, спектакльсем курассĕ. Çавăн пекех хăйсен пултарулăхне те кăтартассĕ. Лагерьте «Дружба» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать.

Телейлĕ, савăнăçлă ачалăхшăн пионерсем партипе правительствăна чĕререн тав тăвассĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче тата лайăххрах вĕренме сăмах парассĕ.

М. ИСАЕВ.

Редакцие килнĕ çыру

Столовăйра йĕркелĕх çук

Столовăя çамрăксем пырса кĕчĕç. Сĕтел çинче выртакан хута илсе вуларĕç те буфет умне талонсем çыртарма пырса тăчĕç.

— Мана «Суп рассольник», çăмарта хăпартни, кофе çырса парăр,— терĕ маларах тăраканĕ.

— Çук,— ответлерĕ О. Ипатова буфетчица.

Меню çине пăхсан кунта ĕçсе-çимеллисем темĕн чухлĕ, теме пулать. Чăннипе апла пулмасть. Çакă вăл акă мĕнрен килет: столовăйăн запасра паха продуктсем пулман.

Столовăйăн хăвăрт пăсăлакан продуктсене усрама нӳхреп çук. Хĕллехи вăхăтра шăннă çĕрулми пĕсеретчĕç.

Хăшпĕр буфетчицăсем вак укçа каялла таварса памассĕ. О. Ипатова буфетчица хăвăрт шутлама тăрăшать. Унăн каялла таварса пама вак укçа пĕрмаях çук. Буфетра эрех висме мензурка çук.

Буфетра премĕк, конфет т. ыт. те сутассĕ. Ку—паха тĕслĕх. Анчах вĕсене хутпа чĕркесе е тарелка çине хурса памассĕ.

Сăра, квас, брага уявсем вăхăтĕнче кăна сутассĕ темеле. Кухньăра апат-çимĕçе япăх хатĕрлессĕ. Хăшпĕр чухне яшка тăварсăр, тепĕр чухне ытлашши тăварлă пулать. Çĕрулмие лайăх тасатмассĕ.

Столовăйра вырăн çителĕксĕр, çавăнпа нумай кĕтме тивет. Савăт-сапана таса çумассĕ. Час-часах тарелкăсем, кашăксем, вилкăсем çумĕнче çӳп-çап çыпăçса тухнине курма пулать. Сĕтел çиттисене вăхăтра çуса тасатмассĕ. Суходолти тата Сосновкăри котлопунктсенче те йĕркелĕх çук.

Чăвашторгăн Атăл леш енчи уйрăмĕ торф предприятийĕнчи столовăйри çитменлĕхсемпе килĕшсе тăрать. Торф предприятийĕн дирекцийĕпе торфком та рабочисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерме тăрăшмассĕ.

Слесарь Л. СОРОКИН,
Бригадир Н. ГЕРАСИМОВ,
Рабочи Н. МИХАЙЛОВ,
Перекет касси работникĕ Н. АЛЕКСЕЕВ.

Çĕнĕ радиоузел

ЕТĔРНЕ. «1-ое Мая» колхозра радиоузел тăвассĕ. Аппаратура туяннă, юпасем лартса пралук карса тухнă. Çитĕс çывăх вăхăтрах колхозниксен килĕсене тата ялти культура çурчĕсене радиофикацилессĕ.

И. ПЕТРОВ.

Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнусем пирки

Кăçалхи майăн 30-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов Турци Республикин Посолĕ Хозар господина çапла пĕлтернĕ:

«Совет Правительстви, юлашки вăхăтра ССР Союзĕ кӳршĕри государствăсемпе çыхăну тытас ыйтусемпе ĕçлесе, ытти ыйтусемпе пĕрле, Совет Союзĕпе Турци пĕр-пĕрипе çыхăну тытас ĕç мĕнле тăни çине те тимлĕ пăхрĕ.

Пуриншĕн те çакă паллă: Совет Союзĕпе Турци пĕр-пĕрин хушшинче 1925 çулта тунă договорăн срокĕ тухнă май, икĕ государство представителĕсен официальнăй калаçăвĕсенче темиçе çул каярах Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнусене йĕркелес ыйтăва пĕр хут мар хускатнă. Çав калаçусенче Армян ССР-ĕпе Грузи ССР-ĕ Турцин хăшпĕр территорийĕсене хăйсем çумне пĕрлештерес пирки хускатнă ыйту, çавăн пекех тата Совет Правительстви ССР Союзне Хура тинĕс проливĕсем енчен килсе тухма пултаракан хăрушлăха сирсе ярас пирки каласа пани палăрнă. Турцин правительствăри тата обществăлла ĕçри çыннисем çав ыйтусене хускатнине кăмăлламан, çакă вара Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнусенче мĕн чухлĕ те пулин палăрмасăр тăма пултарайман.

Кӳршĕсемпе килĕштерсе пурăнассине сыхласа хăварас тата мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетес шутпа Арменипе Грузи правительствисем Турцин хăшпĕр территорийĕсене хăйсем çумне пĕрлештерес ыйтăва пăрахăçлама май пур тесе шутларĕç. Проливсем пирки тăракан ыйтăва илсен вара, Совет Правительстви ку ыйту пирки хăйĕн малтанхи шухăшне тепĕр хут пăхса тухрĕ, ССР Союзне проливсем енчен килсе тухма пултаракан хăрушлăха вăл ССР Союзĕшĕн те, Турцишĕн те йышăнма юрăхлă условисем тунипе татса пама пулать, тесе шутлать.

Çапла вара Совет Правительстви çакăн çинчен пĕлтерет: Совет Союзĕ Турцин нимĕнле территорине те хăйĕн çумне пĕрлештерме шутламасть».

Кăçалхи июлĕн 18-мĕшĕнче Турци посолĕ Хозар господин СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов патĕнче пулнă, ăна Турци Правительстви ячĕпе çакăн пек пĕлтернĕ:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, Его Превосходительство Молотов господин Турцин Мускаври Посолне 1953 çулхи майăн 30-мĕшĕнче вуласа панă тата алла панă заявлении текстĕпе Турци Республикин правительстви паллашрĕ, унта çапла каланă». (Малалла Совет правительствин çӳлте асăннă заявленийĕн текстне пĕтĕмпех çырнă). Унтан Турци Правительствин заявленийĕнче çапла каланă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви ССР Союзĕ Турцин нимĕнле территорине те хăйĕн çумне пĕрлештерме шутламанни çинчен тунă заявление Турци Республикин Правительстви кăмăлласа, асра тытма йышăнать.

Турци Республикин Правительстви çапла калать: кӳршĕсемпе килĕштерсе пурăнассине сыхласа хăварассишĕн тата мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетессишĕн тăрăшасси,—заявленире çавăн çинчен каланă та,—Турци яланах çавăн пек тăрăшнипе тата малашне те тăрăшассипе пĕтĕмпех килĕшсе тăрать.

Çавна май Республика Правительстви Хура тинĕс проливĕсем пирки тăракан ыйтăва Монтрере тунă Конвенцин положенийĕсем тăрăх йĕркелесе цымаллине, — çакна Совет Правительстви те пĕлсе тăрать,—уйрăмах палăртма кирлĕ, тесе шутлать».

Пурăнмалли çуртсем лартассĕ

Басово разъездĕнчен Улатăра пырса кĕнĕ çĕрте, çӳлĕ вырăнта, илемлĕ çуртсем ларассĕ. Нумайăшĕнче ĕнтĕ пурăнассĕ, ыттисене туса пĕтереймен-ха. Ку—пăравуссем юсакан заводăн поселокĕ.

Çак поселока 1949 çулта тума тытăннă. Вăл çул икĕ хваттерлĕ тăватă çурт лартнă. Унтанпа çулсерен темиçешер çурт лартассĕ. Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче поселока тăватă хваттерлĕ икĕ çурт валли детальсем кӳрсе килчĕç. Вĕсене кĕске вăхăтра пухса лартрĕç. Июлĕн 15-мĕшĕнче тепĕр çĕнĕ çурта комисси йышăнчĕ. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне тата икĕ çурт туса пĕтерессĕ.

Строительсем çуртсене хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа тăвассишĕн, материалсем перекетлессишĕн тăрăшассĕ. А. Нужин юлташ ертсе пыракан платниксен бригади нормăна тĕтăшах 200 процента яхăн тултарса пырать. Д. Болдакова, Н. Белякова, А. Миронова, Г. Колосова каменщиксем те задание пĕрмаях ирттерсе тултарассĕ.

Заводăн нумай хваттерлĕ çуртсем 17 тата икĕ общежити пур. Общежитисенче çамрăксем, ытти çуртсенче — семьеллĕ рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пурăнассĕ. Юлашки вăхăтра Шереметьев электросварщика, Сорокин машиниста, Балакин тимĕрçе, Гущарин, Миронов, Скворцов слесарьсене, Ванюшин монтера тата ытти чылай стахановецсене лайăх хваттерсем панă.

Завод дирекцийĕ малашне пурăнмалли çуртсем тата ытларах лартма палăртнă.

А. СМИРНОВ.

Чĕререн тав тăватпăр

Чăвашсен академи театрĕ çулленех Тутар республикинчи Çĕпрел, Пăва, Буденный районĕсенче спектакльсем кăтартса çӳрет.

Çак кунсенче академи театрĕ Буденный районĕнчи Элшел ялĕнче Чăваш АССР тава тивĕçлĕ деятелĕ П. Осипов çырнă «Айдар» пьесăна лартса пачĕ.

Спектакль курма колхозниксем питĕ нумайăн пуçтарăнчĕç.

Куракансем, уйрăмах, Чăваш АССР халăх артисчĕ А. Ургалкин, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем А. Долгова, А. Маштанова, П. Молодов, А. Семенов, Е. Никитин, Г. Фадеев юлташсем лайăх выляннине палăртрĕç.

Спектакль вĕçленчĕ, анчах куракансем килĕсене васкамассĕ. Колхозниксем артистсемпе калаçасшăн, хăйсем лайăх тырпул çитĕнтерни çинчен каласа парасшăн.

Колхозниксем артистсене пĕтĕм чĕререн тав турĕç, вĕсене хăйсем патне час-часах килме сĕнчĕç.

А. ЕМЕЛЬЯНОВ.

Стена хаçачĕ ĕçе йĕркелеме пулăшать

ЭЛĔК. Çулавăçри Хрущев ячĕпе тăракан колхозри «Çĕнтерӳ» ятлă стена хаçачĕ кашни уйăхрах икшер номертен кая мар тухать. 1953 çула кĕнĕренпе 16 номер ытла кăлартăмăр. Колхозниксем хаçата юратса вулассĕ. Эпир бригадăсенче социализмла ăмăртăва сарса пырасси, хуть те мĕнле ĕçе те пысăк пахалăхпа тата вăхăтра пурнăçласси çинчен çыратпăр.

Кăçалхи суракине колхоз 10—11 кун хушшинче вĕçлерĕ, техникăлла культурăсем акмалли плана вăхăтра пурнăçларĕ. Çавăн пекех выльăхсем валли тымарçимĕç лартмалли плана та тултарчĕ. Кĕр калчисене вăхăтра вырăнти тата минераллă удобренипе апат панă.

Çĕртме уйне 2.000 лав тислĕк кăлартăмăр.

Çак ĕçсенче «Çĕнтерӳ» хаçат паллă вырăн йышăнчĕ. Вăл колхозниксене уй ĕçĕсене агротехника вĕрентнĕ пек, кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тума чĕнчĕ. Эпир колхозниксемпе колхозницăсем мĕнле ĕçлени çинчен номертен номере çыратпăр, малта пыракансен опытне сарма тăрăшатпăр.

Стена хаçачĕсĕр пуçне колхозри бригадăсенче боевой листоксем кăларатпăр. Ку таранччен пĕтĕмпе 27 номер боевой листок кăлартăмăр.

Вырăнти стена хаçачĕн ĕçĕ çинчен парторганизаци пухăвĕнче редколлеги отчечĕсене итлессĕ. Эпир малалла татах та лайăххрах ĕçлеме—уйăхра 3—4-шар номер кăларма тăрăшатпăр.

П. КАЗАКОВ,
«Çĕнтерӳ» стена хаçачĕн редакторĕ.

Заем укçине пухса пĕтерчĕç

ВĂРНАР. Вăрманкас ялĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татса облигацисене алла илчĕç. Заем сарас тата укçине сийĕнчех пухас тĕлĕшпе М. Терентьев, А. Тойдеряков, Ф. Андреев уполномоченнăйсем, ял Совечĕн депутачĕсем Н. Петров, В. Федотов, И. Николаев, Г. Матвеев юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕç.

П. КОШКИН.

Витесем тăвассĕ

ШАХАСАН. Сталин ячĕпе тăракан колхозра обществăлла çурт-йĕр нумай тăвассĕ. Пĕлтĕр колхозри строительство бригади 100 ĕне валли, пин чăх-чĕп валли витесем туса лартнă. Кăçал та строительство ĕçĕсем анлă саралса пырассĕ. Нумаях пулмасть гараж туса лартрĕç. Кунсăр пуçне сысна вити, тимĕрçĕ лаççи тата кормокухня тума тытăннă. Çавăн пекех колхозра водопровод тума пуçланă.

А. МИХАЙЛОВ.

Хĕрӳ ĕçсем пуçланас умĕн

КАЛИНИНО. Пирĕн Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи суракине чи кĕске срокра, пысăк пахалăхпа ирттерсе КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак ăнăçлăх колхозри пуçламăш парторганизаципе правлени ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пынинчен килчĕ.

Хальхи вăхăтра пуçламăш парторганизаци колхозниксене тырпула пухса кĕме, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама тĕплĕн хатĕрленме мобилизацилет. Коммунистсем хăйсен вырăнĕсенче лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлессĕ.

Колхоз тырă вырма тухсанах авăн çапса государствăна тырă пама тытăнать. Тырă турттарма транспорт бригади тунă. Бригадăна ертсе пыма Р. Захаров коммуниста уйăрнă. Бригада инвентарьсене юсаттарса хатĕрлерĕ.

Эпир коммунистсен уçă пухăвĕсене час-часах ирттеретпĕр. Унта ялти активистсене чĕнетпĕр. Çак кунсенче пулса иртнĕ пухура тырпул пухса кĕртнĕ тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем панă вăхăтра тумалли политикăлла-массăлла ĕçсен планне сӳтсе явса çирĕплетрĕмĕр.

Агитколлективра 35 агитатор. Вĕсенчен чылайăшĕ коммунистсемпе комсомолецсем. Агитаторсем колхоз производствинче хастарлă ĕçлессĕ. Сăмахран, А. Степанов коммунист яланах колхозниксемпе пĕрле ĕçлет. Вăл колхозниксене хăйĕн ĕçри хастарлăхĕпе хавхалантарать, колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшать, колхозниксемпе тăтăшах калаçусем ирттерет.

Колхозри «Коммунизмшăн» стена хаçачĕ те вăхăтра тухса тăрать. Унăн страницисенче колхозри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен анлă çутатса тăрассĕ. Иртнĕ номерте, сăмахран, ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксене хытă критикленĕччĕ, ун хыççăн вĕсем колхозра тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç.

Колхоз производствинче мала тухнă колхозниксен ячĕсене çырма Хисеп хăми турăмăр. Кунсăр пуçне малта пыракан бригадăна пама пуçламăш парторганизаципе колхоз правленийĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне турăмăр. Ку ялава суракинче мала тухнă иккĕмĕш бригадăна панă.

К. ФЕДОРОВ,
колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Хаçатсен страницисем тăрăх

ЯЛТИ БИБЛИОТЕКА ĔÇĔСЕМ

Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене пропагандăлас ĕçре ялти библиотекăсем пысăк вырăн йышăнса тăрассĕ.

«Хĕрлĕ Октябрь» хаçат Октябрьски районĕнчи Вăрманкасси ялĕнчи библиотека заведующийĕ И. Андреев юлташăн статьине пичетлет. Ку библиотека, пĕлтĕртенпе кăна ĕçлет пулин те, чылай паха ĕçсем туса ирттернĕ.

Библиотека ял варринче, колхоз клубĕнче вырнаçнă. Унта икĕ кабинет тата вуламалли пӳлĕм пур. Библиотека вырнаçнă пӳлĕмсене портретсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе тата тĕрлĕ витринăсемпе илемлетнĕ.

Библиотека 9 хаçат, 14 журнал, çĕнĕ кĕнекесем илсе тăрать. Кĕнекесен хисепĕ ӳссех пырать.

«Ялти ĕççыннисем,—тесе палăртать Андреев юлташ,—библиотекăна юратса çӳрессĕ, вăтам шутпа кашни кун унта 25—40 çын пырать. Султалăк хушшинче 11.916 çын пулнă, вĕсем пурĕ 9.474 кĕнеке илсе вуланă».

Библиотека работникĕсен колхозниксене кĕнекене юратма вĕрентес, çапла вара вулакансен хисепне ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Ку тĕлĕшпе Вăрманкасси библиотекинче час-часах калаçусем ирттерессĕ, хăшпĕр колхозниксемпе уйрăмшарăн калаçассĕ. «Хăшпĕр бригадăсемпе фермăсем библиотекăран инçерех вырнаçнă май, вĕсен валли эпир куçса çӳрекен библиотекăсем усрăмăр»,—тет Андреев юлташ.

Библиотека колхозниксем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме ытти майсемпе те усă курать, колхозниксем ушкăнпа ĕçлекен тата пухăнса ларакан вырăнсенче кĕнекесем сасăпа вуласа парассине организацилет.

Библиотекăна кĕнекесем çĕнĕрен килни çинчен сийĕнчех колхозниксене «Стахановец» стена хаçачĕ урлă тата витринăсем туса пĕлтерсе тăрассĕ. Кунсăр пуçне час-часах кĕнекесен выставкине организацилессĕ. Выставкăсене библиотекăра кăна мар, бригадăсенче, фермăсенче, ял Совечĕпе колхоз правленийĕсем ĕçлекен çуртсенче те тăвассĕ.

«Кашни фермăрах, хăш фермăна мĕнле кĕнекесем ытларах кирлине шута илсе, кĕнекесен витрини тунă,—тесе çырать статья авторĕ.—Ферма работникĕсене, çавăн пекех зоотехникăна курсра вĕренекенсене кирлĕ кĕнекесене тупма пулăшнă».

Çакăн пек туни, паллах ĕнтĕ, ялхуçалăх литературине вулакансен хисепне ӳстерме пулăшнă.

«Кĕçех колхозăн аслă уй-хирĕнче хĕрӳллĕ ĕçсем пуçланассĕ,—тесе çырать Андреев юлташ.—Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра эпир мĕнпур ĕçе уй-хире куçаратпăр».

Анчах палăртас пулать, хаçат çак ырлама тивĕçлĕ статьяра кӳренмелле йăнăшсем тăвать. Вăл хăйĕн вулакансене «Ылтăн çăлтăр кавалерĕн» авторне — С. Бабаевские — С. Бабаев, Я. Ухсайăн «Çул» романне—«Çил», Н. Гоголĕн «Диканька çывăхĕнчи хуторти каçсем» ятлă кĕнекине «Диканьяо çывăхĕнчи хуторти каçсем» тесе çырать.

АГРОНОМСЕН КОЛХОЗ ПРОИЗВОДСТВИНЧИ ОТВЕТЛĂХНЕ ӲСТЕРМЕЛЛЕ

Агрономсем ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан пысăк та ответлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас, наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта ялхуçалăх производствине анлăн кĕртсе пырас ĕçсен организаторĕсем пулса тăмалла.

Çак хисеплĕ тивĕç çинчен «Авангард» хаçат хăйĕн умстатьинче агрономсене питĕ вырăнлă асăрхаттарать.

«Калас пулать,—тесе çырать хаçат районти агрономсем çинчен,—вĕсем суракине кĕске срокра тата агротехника вĕрентнĕ пек пысăк пахалăхпа ирттерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç. Ытти çулсемпе танлаштарсан, кăçал вăрлăха яровизацилесе, хĕреслĕ майпа нумайрах акнă, вырăнти тата минераллă удобренисемпе ытларах усă курнă».

Анчах çураки хыççăн, тесе палăртать хаçат, хăшпĕр агрономсем ĕçе сӳрĕклетнĕ.

«Путь Ленина» колхозра, хаçат пĕлтернĕ тăрăх, 35 гектар çинчи урпана çумкурăкĕ хупласа илнĕ, колхоз тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ тума васкаман, анчах машина-трактор станцин ку участокри агрономĕ Махмутов юлташ колхоз производствинче хăйĕн организаторла рольне кирлĕ чухлĕ палăртмасть.

«Агрономсем ялхуçалăхĕнчи малта пыракансен опычĕ çинчен лекцисемпе докладсем пачах та ирттермессĕ, вĕсен опытне мĕнпур колхоза çитерессишĕн кирлĕ пек ĕçлемессĕ,—тесе çырать хаçат.—Вĕсем тырпул тухăçлăхне ӳстермелли майсем çинчен колхозниксен анлă массисемпе пĕрле сӳтсе явмассĕ, правлени ларăвĕсенче, партипе комсомол организацийĕсен уçă пухăвĕсенче сахал пулассĕ, пулнă чухне те тухса каламассĕ».

Вăрлăх участокĕсене лайăх сăнаса тăрасси—агрономсен малтанхи тивĕçĕ пулса тăрать.

«Ленин ялавĕпе» хаçат Куславкка районĕнчи «Правда», «Динамо», «Коммунар», «Алга», «Большевик» колхозсенче вăрлăх участокĕсем уйрăмах пахине палăртать.

«Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, колхозсенчи вăрлăх участокĕсене пăхса тăрас ĕçе нумай лайăхлатмалла», — тесе çырать «Ленин ялавĕпе» хаçат.—Вăрлăх туса илес ĕçри лăпкăлăхпа малашне килĕшсе тăмалла мар. Мĕншĕн тесен çакă вăл колхозсене пысăк сиен кӳрет».

Хаçат калчасене пăхса ӳстерес тата тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тапхăрта пуçламăш парторганизацисемпе колхозсен правленийĕсем тата ял Совечĕсем умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс палăртать, анчах çав вăхăтрах ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсен задачисене пачах асăнмасăр иртсе каять. Хаçатра ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсем çинчен çырнине тупса вулама çук.

Колхозлă ял хресченĕсем хĕрӳллĕ ĕçсен тапхăрне кĕчĕç. Районсенчи хаçатсен тырпул пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парас ĕçсенче ялхуçалăх специалисчĕсен ответлăхне ӳстересси çине тимлĕрех пăхмалла.

ОБЩЕСТВĂЛЛА ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ВАЛЛИ—АШĂ ВИТЕСЕМ

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре çутă та ăшă витесем çителĕклĕ пулни паллă вырăн йышăнать. Çакна асра тытса, республикăри чылай районсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ витесем тăвас, киввисене юсас ĕçсене çуллах туса ирттерме тăрăшассĕ.

«Сталин ялавĕпе» хаçат Шăмăршă районĕнче ку ĕç чăтма çук начар пынине палăртать, çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçре ответлăха туйман колхозсен руководителĕсене тивĕçлипе критиклет, çитменлĕхсемпе йăнăшсене тĕрĕс кăтартса парать.

Выльăх-чĕрлĕх валли лайăх çурт-йĕрсем тунă çĕрте МТС колхозсене çителĕклĕ пулăшса тăмасть-ха. Райсовет исполкомĕн ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ те колхозсенчи строительство ĕçĕсене çителĕксĕр ертсе пырать, колхозсенчи строительство бригадисене сахал пулăшать.

Районсенчи хаçатсен колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас ĕçпе куллен интересленмелле. Малта пыракан колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас ĕçре вырăнти материалсемпе усă курни çинчен каласа памалла, лайăх ĕçлекен строительство бригадисен, уйрăм платниксен пархатарлă ĕçĕсемпе паллаштармалла, сӳрĕк ĕçлекенсене хăюллăн критиклесе, тăрă шыв çине кăлармалла. Çапла вара кашни колхозра выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма витесене тĕплĕн хатĕрлесе çитерме колхозниксене мобилизацилесе пымалла.

Ял Совечĕ пуçарнипе

ШĂХАСАН. Ухман ял Советне пĕрлешсе пысăкланнă Ленин ячĕпе тăракан тата «Победа» колхозсем кĕреççĕ. Ял Совечĕ колхозсен обществăлла хуçалăхне малалла аталантарас ĕçе çулсеренех анăçлă ертсе пырать.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисемпе ытти обществăлла çуртсем лартас ĕçре вырăнти ресурссемпе усă курасси çинчен ял Совечĕ сессисенче, ларусенче тăтăшах сӳтсе явать. Сессисенче колхоз председателĕсен В. Павловпа П. Михайлов юлташсен доклачĕсене сӳтсе явнă. Сесси ирттерме хатĕрленнĕ кунсенче яланхи комисси членĕсем обществăлла çуртсен пахалăхне, выльăх-чĕрлĕх валли витесем çителĕклипе çителĕклĕ маррине тĕрĕслеççĕ. Вĕсем обществăлла çуртсене пĕр çĕре лартма, вĕсене стандартлă тума, вырăнти строительство материалĕсемпе анлăн усă курма сĕнӳсемпе канашсем параççĕ.

Ухман ял Советне кĕрекен колхозсене нумайранпа ĕнтĕ Канашри вагонсем юсакан завод электричество энергийĕ парса тăрать. Çав энергипе колхозсем малтан обществăлла çуртсемпе колхозниксен кӳрчĕсене çутатма çеç усă курнă. «Энергипе ытти ĕçсене тума та çителĕклĕ. Унпала строительствăна тата фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме усă курмалла. Строительство валли вырăнти материалсем ытлашшипех пур: тăмпа хăйăр ял таврашĕнчех темĕн чухлĕ, саман тума улăм çителĕклĕ. Канашран мĕн чухлĕ кирлĕ таран шлак турттарса килме пулать. Пурте вĕсем алă айĕнче. Хăюллăн ĕçе тытăнни кăна кирлĕ», тенĕ активистсем.

Хальхи вăхăтра ял Советĕнчи икĕ колхозра та ятарласа тунă строительство бригадисем ĕçлеççĕ. Унта платниксене, саман кирпĕч тума пĕлекенсене, электромонтерсене, кăмака тăвакансене, штукатурщиксене тата ытти ăстаçăсене уйăрнă. Бригадăсене ертсе пыма колхозсенчи ăста строительсене хушнă.

Ял Совечĕпе унăн активĕ пуçарнипе Ленин ячĕпе тăракан колхозра çурт-йĕр нумай тăваççĕ. Кăçал çĕнĕрен 400 сысна валли шлакпа бетонран, 40 кĕсре валли саман кирпĕчрен типовăй витесем лартаççĕ, малтан лартнă амбарсене тата ытти çуртсене юсаççĕ. Колхозăн 24 гектар çинчи садĕнчен çулсерен пысăк тупăш илмелле тăвас тесе, унти хăшпĕр ĕçсене, уйрăмах йывăçсене шăварассине механизацилеме палăртнă. Çак ĕçсене тума сад·сывăхĕнчи çырмара пысăк плотина туса, унта ятарласах центробежнăй насус лартаççĕ.

Строительство бригадине хальхи вăхăтра А. Игнатьев колхозник ертсе пырать. Комсомол организацийĕ сĕннипе строительство ĕçне колхозри комсомолецсемпе çамрăксене анлăн хутшăнтараççĕ, вĕсене вĕрентеççĕ. В. Лукиянов, В. Григорьев, Н. Андреев тата ытти çамрăксем ăста платниксем пулчĕç. И. Алексеев, Г. Иванов, Т. Филиппова саман кирпĕч тума, шлакпа бетона çăрса çурт тума лайăх вĕренсе çитрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра гидротаран тата центробежнăй насуссем пур. Вĕсем пĕр километр ытла аякри шыва фермăсем патне илсе пыраççĕ. «Победа» колхозра та шыв уçламалли центробежнăй насус лартнă, халĕ тепĕр насус лартма хатĕрленеççĕ.

Строительство ĕçĕсем сарăлса пынипе пĕрлех, колхозсем ялхуçалăх техникипе те çултан-çул пуянланса пыраççĕ. Юлашки çулсенче кăна Ленин ячĕпе тăракан тата «Победа» колхозсем автомашинăсем туянчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз кăçал «Москвич» çăмăл автомашина илчĕ. Колхозсенче механизациленĕ армансем, хăма çурмалли станоксем электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ.

Ял Совечĕн благоустройство комиссийĕ (ăна М. Петров депутат ертсе пырать) пуçарнипе ял Советĕнчи колхозсенче йывăççем лартса ӳстересси йăлана кĕнĕ. «Победа» колхоз 8 гектар çинче вăрман лартса ӳстерет. Ял Советĕнче 3 пулă пĕви пур. Халĕ тăваттăмĕш пысăк плотина тума пуçлаççĕ.

Г. ИСАЕВ,
С. АСЛАН.

Строительсем патĕнче

Канаш районĕнчи чылай ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра экскурсире пулчĕç. Унта вĕсем колхозри строительсен ĕç опычĕпе паллашрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра строительствăра саман кирпĕчпе анлăн усă кураççĕ. Нумай обществăлла çуртсене кунта саманран тунă.

Колхоз председателĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ В. Павлов юлташ Канаш районĕнчен килнĕ хăнасене колхозри строительство ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Правлени çурчĕпе юнашар пĕр пысăк шурă çурт ларать. Кунта ялпо правленийĕ вырнаçнă.

— Акă, куратăр-и,—терĕ В. Павлов юлташ.—Пирĕн ялта ĕлĕкренпех саман кирпĕчпе усă курнă. Ку çурта 58 çул каярах туса лартнă. Халĕ те вăл нимĕн чухлĕ те пăсălман.

Иртнĕ çулта колхозниксем саман кирпĕчрен автогараж туса лартнă. Çурт чул çурт пекех илемлĕ те çирĕп. Гараж тăррине тăмпа улăма хутăштарса витнĕ.

— 25 çултан кая мар чăтма пултарать. Малашне эпир пур обществăлла çуртсене те тăмпа улăма хутăштарса витетпĕр,—теççĕ колхозниксем.

...Строительство площадки. Колхозниксем хăшĕсем тăм çăраççĕ, теприсем шлакпа цементран кирпĕч тăваççĕ, виççĕмĕшĕсем хатĕр кирпĕче купалаççĕ. Тепĕр енче шлакпа цементран 300 сысна вырнаçмалăх вите тăваççĕ.

— Кун пек кирпĕче кашни колхозрах тума пулать,—тет В. Павлов юлташ. — Укçалла эпир цемент кăна илетпĕр, ыттисем пурте—вырăнти материалсем. Кирпĕч тума 1 витре цемент çине виçĕ витре хăйăр татаултă витре шлак ярса типĕлле хутăштаратпăр. Пур материалсем те лайăх хутшăннă хыççăн шыв ярса çăратпăр. Çапла вара кирпĕч тума чи чаплă шĕвек пулса та тăрать. Мĕн чухлĕ йĕпесапа, çавăн чухлĕ кирпĕч хытса, çирĕпленсе пырать. Уяр çанталăк чухне типме хунă кирпĕче яланах шыв сапса тăратпăр.

Колхозри фермăсене шыв парас ĕçе çăмăллатса пыраççĕ. Иртнĕ çулта çăл чавса, шыв улăхтаракан насус лартнă.

Витесем сывăхне туса лартнă шыв башнинче (аялти хутĕнче) кормозапарник, çĕрулмипе тымарçимĕççене çăвакан машина вырнаçтарса лартнă. Вĕсем пурте электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ.

Колхозра вырăнти материалсемпе анлăн усă курма пуçланă. Кунта çатана тăмпа хытарса чăх вити тунă. Силос шăтăкĕсене пурне те цементпа шăлса çирĕплетнĕ.

Чăрăшкасси ялĕ Ухман ялĕнчен икĕ километрта. Ку ял Ухман ялĕпе пĕр колхоза пĕрлешнĕ.

Ялта фермăсене шыв парассине механизацилеме пуçланă.

Пĕве сывăхне вырнаçтарса лартнă (çĕр айĕнчи будкăра) насус хăй тĕллĕнех шыв парать. Нимĕнле электричество вăйĕ те кирлĕ мар. Ун пек насуса кашни колхозрах тума пулать.

Экскурсантсем Ленин ячĕпе тăракан колхозăн строительство ĕçĕсемпе тĕплĕ паллашрĕç.

И. КУЗЬМИН.

Сĕт тухăçлăхне чылай ӳстернĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз çĕрĕ вăрманта. Кунта выльăх-чĕрлĕх усрама условисем питĕ лайăх. Ĕне выльăхсем çу каçиччĕнех вăрманта çӳреççĕ, хĕллехи вăхăтра çитерме утă нумай хатĕрлеме пулать.

Анчах Калинин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çитĕнӳсем тăвайман. Уйрăмах майракаллă шултра выльăхсем ĕрчетес ĕç юлса пычĕ. Пĕлтĕр 30 сăвакан ĕнерен пурĕ те 19 пăру çеç пăхса ӳстернĕ, кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 484 литр сĕт суса илнĕ. Ытти выльăхсен тухăçлăхĕ те питĕ пĕчĕккĕ пулнă. Сăмахран, 37 сысна аминчен пурĕ те 73 çура çеç илнĕ. Колхозра витесем çителĕксĕр пулнă пирки выльăхсен шутне ӳстерме май пулман.

Кăçал колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне лартнă ответлă задачăсене тĕп вырăна хурса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма чылай ĕçсем турĕç. Фермăсенче ĕçлеме колхозри чи хастарлă колхозниксемпе колхозницăсене уйăрнă. Сăмахран, сĕт-çу фермин заведующийĕ пулса ĕçлеме пултаруллă çамрăк колхозницăна Е. Козловăна, дояркăсем пулма Ивановăпа Константинова колхозницăсене, телятница пулма Андреева колхозницăна, кĕтӳçĕ пулма ку таранччен халăх кĕтӳне 17 çул хушши кĕтнĕ А. Терентьев колхозника çирĕплетнĕ.

Колхоз правленийĕ фермăра ĕçлекенсем валли лайăх условисем туса пама тăрăшать. Кăçал сĕт-çу ферминче ĕçлекенсене пурăнма çĕнĕ çурт туса лартнă. Ферма работникĕсем хушшинче культурăллă-массăлла ĕçе аван йĕркеленĕ. Кăçал вĕсем валли ятарласа «Сельское хозяйство», «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ», районта тухса тăракан «Коммунар» хаçатсене, «Советская зоотехния», «Социалистическое животноводство» журналсем çырăнса илнĕ.

Колхоз кăçал выльăх витисем лартмалли плана вăхăтра тултарма тăрăшать. Пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Корнилов юлташ ертсе пыракан строительство бригади çак кунсенче сысна вити туса пĕтерет. Бригада членĕсем халĕ лаша вити тăваççĕ. Кĕрхи сивĕ пуçланичченех бригада членĕсем сурăхпа качака-кĕшĕксем валли çĕнĕ витесем туса пĕтерме сăмах панă.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн çапла тăрăшнипе пула колхозри хăшпĕр фермăсем малтанхи çитĕнӳсем турĕç. Ĕнесенчен сĕт суса илесси, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, тăватă хута яхăн ӳснĕ. Ĕнесен сĕт тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тунă малтанхи çитĕнӳсем ахальтен пулман. Кăçал сăвакан ĕнесене уйрăм пăхаççĕ. А. Терентьев ĕнесене яланах лайăх курăклă вырăнсенче çӳретме тăрăшать, кунне 4—5 хутран кая мар шăварать. Терентьев юлташ ĕнесене ирхине 3 сехетрех çитерме илсе тухать те 5 сехет тĕлĕнче сума кĕртет, ун хыççăн каллех çитерме тухать. Шăна-пăвансем аптăратма пуçласан каллех витене илсе кĕрет. Кăнтăрла вăхăтĕнче дояркăсем ĕнесене курăк çулса çитереççĕ. 4—5 сехетрен пуçласа çĕрле пуличченех ĕнесене курăк çинче çӳретеççĕ.

Колхоз правленийĕпе фермăра ĕçлекенсем малтанхи çитĕнӳсемпе лăпланмаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли татах та нумай. Колхозниксем хĕллехи вăхăтра çитерме выльăхсем валли çителĕклĕ таран сĕтеклĕ апат хатĕрлеме, фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме тăрăшаççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Мăн çул çинче

(Шупашкарти юрă праçникĕ хыççăнхи шухăшсем)

Уяв! Авалтан пынă халăх йăли. Мĕн каласа юрламан-ши чăваш çав çурхи савăнăçпа чĕрĕлĕхе, çутçанталăк вăраннă тапхăра, юрату-савăшу тапхăрне пĕлтерекен праçник çинчен!

Хĕрсем уява тухсан
Килет уяв илемĕ...

Çак уяври ачасем
Пуçне ухса юрлаççĕ...

Ах мăнтарăн уявĕ!
Кĕçĕрхи кас чăранать...

Сар чечек пек уява
Епле ăсатса ярар-ши?..

Аллă çул ытла ĕлĕкрех вырăссен писателĕ Н. Г. Гарин (Михайловский), чăваш уявне ытараймасăр, ырă сăмахпа çырса хăварнă.

Вырăссен малта пыракан, этем тивĕçне хисеплекен гуманизмлă литератури чăвашсене ăшă кăмăлпа асăнни сахал мар пулнă. Час-часах пире пысăк художниксем çĕршывăмăрпа халăхăмăра хамăр курма ĕлкĕрейменех енчен те кăтартса параççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ кашни чĕлхене пĕр шая хурса, кашнин йăлине пĕр тан хисеплесе, çирĕпленсе пырать.

Атăл тавраш ĕнчи халăхсене авалтан сăнакансем чăваша, юрă ăсти тесе шутлаççĕ. Ачаран сăпка юрри итлесе ӳсетпĕр, çитĕнерехпе улах юрри, уяв юрри илĕрте пуçлать, ара-арăма çитсен, туй юррипе мăшăрланатпăр, кил-çурт çавăрса пĕрене пусĕ йăтнă чух, ака-суха тунă чух, кĕпер хывнă чух тĕрлĕрен ĕç юрри юрлатпăр; ĕçке-çике кĕреке юррипе илем кӳретпĕр, иртсе пыран кун-çула шухăша яракан юрăсемпе тавçăрса илме тăрăшатпăр; ватăлса вилсен те юпа юррипе ăсанса çĕре кĕретпĕр.

Анчах чăваш юрри çĕршер çул хушши çут тĕнчене тухаймасăр пăчăхса пурăннă. Пирĕн асран кайми композитор Ф. П. Павлов çав саманана «Çырмари юрă» тесе хăварнă. Пирĕн мухтавлă поэт К. В. Иванов халăхăн ĕлĕкхи пурнăçне чĕрене ыраттаракан сăмахсемпе сăнласа панă:

...Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçунта куç тулли?

Вунсакăр çулхи поэт халăх чунне кĕрсе курасшăн пулнă, ăна ăнланса илесшĕн çуннă. Савăнăçĕ нумаях пулман ĕнтĕ... Хурлăха парăнас мар тени кăна юрлатарнă тепĕр чух çынсене. Мĕн пит хĕснине халăхĕ те, унăн сăвăçи те аванах чухланă. Анчах пат тӳррĕн каламa май килмен: ытарлăн кăна каласма пултарнă. Кашни сутă тӳмеллĕ тумтир тăхăннă çын чăваша шиклентернĕ. Эпир асăннă Гарин та, çул-йĕр инженерĕн тумĕне сӳренĕскер, «ман экипаж сывăхарнă май çынсем малтан чăл та пар тарса саланчĕç» тесе çырать. «Эпир темле чиновник пулĕ терĕмĕр,—терĕ ватă чăваш мана саламласа», тет писатель.

Кăçалхи июнь уйăхĕнче пĕтĕм республика юрăпа янăраса тăчĕ. Июлĕн пиллĕкмĕшĕнче Шупашкарпа юнашарти вăрмана халиччен пулман аслă Уяв пуçтарăнчĕ. Аллă-утмăл пин çын умĕнче темиçе пин çын—чăвашĕ те, вырăсĕ те, тутарĕ те—хăйсен юрлас-ташлас ăсталăхне, шăпăр-купăс калăс тимлĕхне кăтартса пачĕç. Пĕтĕм халăх çĕкленсе юрланă кунсенче пире ирĕксĕрех «Çырмари юрă» самани аса килчĕ: ĕлĕкхипе хальхине танлаштарса пăхмасăр малашнехине курма та хĕн-çке. Малашнехи — халăх пултарулăхĕ вăйлăран вăйлă ӳссе пырасси—çак июлĕн пиллĕкмĕш кунне çуллен-çулхи йăла—традици—тунинчен те килет. Халăхран тухса тăракан талантсене—илемлĕ те уçă сасăллă юрăçăсене, тĕрлĕрен музыка ăстисене, ташă мастерĕсене—профессионаллă искусствăна çĕнетме чĕнсе илесчĕ.

Юлашки вăхăтра пирĕн композиторсем халăх юррисене хитрелетме пăрахрĕç. Çак Ф. П. Павлов сăмахне тĕрĕс ăнланса, хамăрăн пуян юрă пултарулăхне пĕтĕм çĕршыв мулĕ тăвасси—кирлĕрен те кирлĕ ĕç пек туйăнать пире.

Халăх çĕнĕрен çĕнĕ юрă-сăвă хывать. Ытти чĕлхепе юрлакан юрра чăвашлатса чĕри патне пыртарать. Поэтсем çырнине те тепĕр чух, композиторсене кĕтмесĕрех, хăй кĕвĕлесе янăратса ярать. Кивĕ юрăсене çĕнĕ сывлăш кĕртсе, самана шайне çывхартма тăрăшать, манăçа юласран сыхлать, Сăмахран, эпир анатри чăвашсем пĕр ĕçкĕ юррине çĕнетнине асăрхарăмăр: «Ĕçсессĕн те ӳсĕр ай кам пулмĕ? Турă парсан пуян кам пулмĕ?»—тенĕ юррăн юлашки йĕркине халĕ «Хăй тăрăшсан пуян кам пулмĕ?» тесе юрлаççĕ.

Пирĕн халăх хушшинче темиçешер çĕр юрă астăвакансем тĕл пулаççĕ. Сăмахран: республикипе чапа тухнă Г. Ф. Федоров пине яхăн юрă—сăвăллине те, сăвăсăррине те—хăйĕн пуçĕнче упранă. Çакă пире халăх юррисене çырса илес ĕçе тепĕр хут тапратса, çине тăрсах туса пыма хушать. Юрă-сăвă пуçтаракансене, çырса илекенсене пулăшса хавхалантарсах тăмалла. Ĕмĕрсен ăсĕ-тăнĕ, шухăшĕ-кăмăлĕ, хуйхи-суйхи, вăййи-кулли,—çакă пурте кĕнеке çине ӳктĕр.

Ĕлĕкхи уяв—ял уявĕ пулнă. Виçĕ ялпа, çичĕ ялпа, вуникĕ ялпа пĕрле иртернĕ уявсене çултан-çула асăнса пыратчĕç. Халĕ пирĕн хамăрăн рабочи класс ӳссе аталанать, чăваш юрри хулара—завод клубĕнче, цехра, кăткăс пир-авăр станĕ умĕнче, нумай хутлă чул çуртсен пусмисем çинче янăрать. Чăваш рабочийĕ мĕн юрлать, мĕнлерех ташласа савăнать? Çакна пирĕн Халăх пултарулăхĕн çурчĕ сăнаса пырать-ши? Çакна пирĕн фольклорçăсем епле тĕпчесе, мĕнле кăтартĕçши? Хула çыннин пурнăç хăвăртлăхĕ ялти пек мар, йăли-халăмĕ те урăхларах... Апла унăн тапмакĕ-таппи те хăйне евĕрлĕ пулма кирлĕ. Хула çынни урăх халăхпа хутшăнарах парать, музыка тĕлĕшпе те ун чунĕ чĕри урăх халăх кĕввисене ăнсатрах ĕнерет. Анчах çапах та вырăссен тата ытти халăхсен аслă композиторĕсене ма чăвашла итлес мар-ха? Уйрăм арисене, дуэтсене, романссене ма куçарас мар пирĕн тăлмачсен? Паллах, ку—малтанлăха çеç. Пурăна-киле эпир оперăсене те пĕтĕмĕшпех лартса кăтартма пултарас патне çитмелле. Ку таранччен пирĕн музыка искусстви темле «вак аластилле» аталанса пычĕ-ха. Малашне вуншар çул урлă пăхса планлас пулать республикăри музыка пурнăçне. Пирĕн куçа оперăпа балет театрĕ курăнать. Пирĕн хăлхана чăваш оперин, опереттин, балечĕн кĕвви илтĕнет. Паллах, чăваш музыки ун чухне нумай урăх чĕлхесене те çăмăлах куçма пултарĕ. Савăнпа та халĕ «Нарспи» оперăна Хусанта лартма хатĕрленеççĕ тенинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Вилĕмсĕр поэмăна вырăсла, тутарла, пушкăртла, удмуртла, марилле, мăкшăлла вулакансем çумне кăçал тата украинла вулакансем хутшăнчĕç пулсан, унпа хавхаланнă композиторсем ăна пур чĕлхепе те янăрамалла çырассине шансах тăратпăр эпир. Малтан чăваш поэми чăвашла янăраса тухсан—чыс та мухтав пирĕн композиторсене! Юрлакансем ăна çĕклесси паллах: ку çапла иккенне кăçалхи Уяв лайăх кăтартса пачĕ. Ситтер çулсенчех оперăпа балет студийĕ уçас пирки те шухăшламалла.

Ĕлĕкхи чăваш юрри—«Çырмари юрă» пулнă. Хальхи юрă халăхпа пĕрле çырмаран ту çине улăхрĕ. Шупашкарпа Етĕрне хушшинчи мăн çулăн икĕ енĕпе кашласа ларакан вăрман — Атăлăн сӳлĕ сăрчĕпе пĕр шайлă вырăнта. Çав вăрман уçланкинчен кăçал чăваш юрри пĕтĕм республика тăрăх янăраса кайрĕ. Чăваш юррипе ылмашăнса вырăс, украина, тутар тата ытти тăванла халăхсен юррисем те умлă-хыçлăн кĕвĕленсе шăранчĕç.

Халăхсене пĕр-пĕринчен ютшăнтаракан ылханлă саманана каялла тавăрасшăн, партипе совет влаçне улталаса, халăх умĕнче икĕпитленсе курнăçланакан сутăнчăксем пирĕн хаваслăха хура чаршавпа хуплама пăхрĕç. Халăх çилли, халăх ылханĕ çав хура юнлă тăшмансене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа хăртĕ!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ хыççăн утса, унпа алла-аллăн тытăнса, эпир çав ту çине хăпартăмăр. Хыçра сакăлталлă та чăнкă çĕнтерӳ çулĕ. Умра — вĕçĕ-хĕррисĕр сарлака тавракурăм!

Ĕçчен халăх, канăçăмасăр-тумасăр куллен-кун тăрăшса, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне ситерчĕ: хĕрлĕ ту çине хăпарчĕ, пуриншĕн те анне пулса тăракан Тăван çĕршыва юрарĕ.

Петĕр ХУСАНКАЙ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Чурачăк районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомол пуçламăш организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен çыру килнĕччĕ.

Редакци çырăва КПСС Чурачăк райкомне тĕрĕслеме янăччĕ. Райком çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. КПСС райкомĕ ВЛКСМ райкомне Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацине ертсе пырассине тата массăлла ĕçе лайăхлатма хушнă.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Кампанилĕх тыткăнĕнче“

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 26-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Кампанилĕх тыткăнĕнче» ятлă статьяра Калинино районĕнчи «Сталин çулĕпе» хаçат районти колхозсемпе машина-трактор станцийĕ тырпул пухса кĕртме хатĕрленни çинчен çиелтен çырнине кăтартса панăччĕ.

КПСС Калинино райкомĕ «Кампанилĕх тыткăнĕнче» ятлă статьяна бюро ларăвĕнче сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. Парти райкомĕн бюровĕ статья тĕрĕс пулнине палăртнă, районти хаçат редакторне Краснов юлташа хаçатра район пурнăçне кирлĕ пек çутатса пыма, хаçатри материалсен пахалăхне ӳстерме хушнă.

КПСС райкомĕн бюровĕ редактора, хаçат редакцийĕн ĕçне план тăрăх туса пыма, ĕç планне кашни уйăхрах райком бюровĕнче çирĕплетме тăратма хушнă.

Апат-çимĕç продукчĕсем ытларах туса кăларар

Республикăри вăрмансенче çырла, кăмпа çулсеренех нумай пулать. Колхозсенче улма-çырла сачĕсем ӳсрĕç. Урăхла каласан, пирĕн ĕççынисем валли паха апат-çимĕç нумайрах туса кăларма кирлĕ чĕртавар çителĕклĕ. 1952 çулта апат-çимĕç комбиначĕсем 150 тонна улма-çырла туянчĕç, варени, повидло чылай пĕçерчĕç, çырла шывĕ чылай хатĕрлерĕç. Кăçалхи план тăрăх, 250 тонна улма-çырла, 100 тонна çырла шывĕ хатĕрлемелле, 100 тонна повидло пĕçермелле.

Çырла хатĕрлесси—вăхăтлăха пыракан ĕç. Малта пыракан предприятисем улма-çырла туянма колхозсемпе договорсем тăваççĕ, сад ытларах ĕрчетме, вăрманти пуянлăхпа туллинрех усă курма тăрăшаççĕ. Шупашкар хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ Атăл леш енче çырла шывĕ хатĕрлемелли тата кăмпа тăварламалли пункт уçнă. Вăл кĕске вăхăтра 65 центнер ытла хăмла çырли хатĕрленĕ. Сĕнтĕрти апат-çимĕç комбиначĕ те паха тĕслĕх кăтартать. Çĕмĕрлери апат-çимĕç комбиначĕ хăйĕн садĕнче чылай çырла пухма ĕмĕтленет.

Улма-çырлана чĕрĕлле нумай усрама май çук, çавăнпа хĕллехи вăхăтра çимесахăрпа варени, повидло, сироп, экстракт пĕçереççĕ, çырла шывĕ тăваççĕ. Çав çимĕçсем питĕ усăллă, мĕншĕн тесен чĕрĕ улма-çырлари витаминсем, минераллă тăварсем, сахăр, тутлă шăршлă япаласем, йӳçексем пурте çаплах юлаççĕ. Çырла шывне çаплах та ĕçме юрать. Унтан хĕрлĕ эрех, морс, тутлă шывсем тăваççĕ.

Варени пĕçерме сахăр пулмасан, çырла шывĕсене вĕретсе экстракт тăваççĕ. Пысăкрах предприятисенче çырла шывĕсене автоклава ятлă аппаратра, пĕчĕкрех предприятисенче—пăхăр тазсем çинче вĕретеççĕ. 5—10 килограмм çырла шывĕнчен пĕр килограмм экстракт тăваççĕ. Экстракт нумайччен пăсăлмасть.

Вăрманта ӳсекен хăмла çырли, хурăн çырли, хура çырла, пĕрлĕхен, хурлăхан, кĕтмел питĕ хаклă апат-çимĕç пулнине пурте пĕлеççĕ. Шурлăхлă вырăнсенче шур çырли нумай ӳсет. Совет ученăйĕ А. Шмук академик шур çырлинче пилĕк процент таран хина йӳçекĕ пуррине тĕпчесе пĕлнĕ. Çак йӳçек уйрăм чир-чĕртен сывалма пулăшать. Атăлпа Сăр таврашĕнче шăлан йывăççи нумай ӳсет. Шăлан çырлинче 5,5 процент таран «С» витамин пур. Çав витамин çынсене цинга чирĕнчен сыхлать.

Апат-çимĕç комбиначĕсем, промартельсем вăрманти пуянлăхпа усă курас тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, пĕлтĕр Етĕрнери апат-çимĕç комбиначĕ 42 тонна, Улатăр хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ 36 тонна улма-çырла хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах нумай апат-çимĕç комбиначĕсем, вăл шутра вăрман сывăхĕнче вырнаçнисем (Йĕпреçри, Сĕнтĕрвăррийĕнчи, Хĕрлĕ Чутайри) вырăнти чĕртаварпа япăх усă кураççĕ. Вĕсен руководителĕсем государство сахăр, çăнăх нумайрах уйăрса парасса ытларах шанса пурăнаççĕ. Малашне çавăн пек йăлана пĕтермелле.

Улма-çырла хатĕрлемелли хĕрӳллĕ тапхăр пуçланчĕ. Кашни предприяти государство çирĕплетсе панă плана тултарма çеç мар, ирттерсе тултарма та чĕртавар çителĕклĕ хатĕрлесе хума, ĕççынисене паха апат-çимĕç çителĕклĕ парса тăма тивĕçлĕ.

Паха варени, повидло, экстракт пĕçересси технологи дисциплинине пĕр пăркаланмасăр пурнăçланинчен, санитари условийĕсем лайăх пулнинчен, работниксем техникăна пĕлнинчен, тасалăхшăн кĕрешнинчен нумай килет. Уйрăмах технорукĕсен, мастерсен, бригадирсен хăйсен ответлăхне ӳстермелле, производство культурине хăпартмалла, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сармалла, пысăк пахалăхлă продукци çеç туса кăларакан бригадăсем ытларах организацилеме тăрăшмалла. Çавăнпа пĕрлех хатĕр продукцие лайăх усрама мĕн кирлине пурне те туса çитермелле. Варени, повидло, джем валли типĕтнĕ йывăçран тунă пичке çеç юрăхлă. Чĕрĕ, типĕтмен йывăçран тунă пичкере вĕсем хăвăрт йӳссе пăсăлаççĕ.

Республикăри вăрмансенче тĕрлĕ йышши кăмпа нумай ӳсет. Шурă кăмпа, кăрăç, хурăн кăмпи тата ыттисем те—лайăх, усăллă апат-çимĕç. Кăмпара 5 процент таран белок, 0,5 процент çу, çавăн чухлех сахăр, пĕр процент минераллă тăвар пур. Тăварланă, типĕтнĕ тата маринованнăй кăмпана ĕççыннисем тулли кăмăлпа туянаççĕ. Апла пулин те апат-çимĕç комбиначĕсем ĕççыннисен ыйтăвне тивĕçтерме тăрăшмаççĕ. Магазинсемпе столовăйсенче сайра хутра çеç кăмпа пулать. 1952 çулта апат-çимĕç комбиначĕсем пурĕ те 8 тонна çеç кăмпа хатĕрленĕ.

Кăçал çумăр тăтăшах çăвать, кăмпа нумай пуласси паллă. Апат-çимĕç комбиначĕсен, промартельсен, потребительсен кооперацийĕн кăмпа тăварлама савăтсапа çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла. Кăмпа нумай ӳсекен вырăнсенче ятарласа пункт сем уçмалла.

Кăмпа вырăнĕ-вырăнĕпе çеç ӳсет. Пирĕн шухăшпа, тивĕçлĕ организацисен (потребительсен кооперацийĕн, апат-çимĕç комбиначĕсен, ялхуçалăх институчĕн) кăмпа нумай ӳсекен вырăнсене тĕпчесе вĕренмелле. Вăрман сывăхĕнче вырнаçнă шкулсен коллективĕсем те вăл тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса ирттерме пултараççĕ. Экскурсисем, походсем ирттернĕ тата кăмпа пуçтарнă чухне комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, пионерсем хăш вырăнта мĕнле йышши кăмпа ӳснине палăртсан обществăна усăллă ĕç тунă пулĕччĕç.

Пирĕн çĕршывра çĕрулмипе пахча çимĕç ӳсмен вырăнсем пур. Унта пурăнакан ĕççыннисем валли çĕрулми тата пахча çимĕç çителĕклĕ типĕтесси—апат-çимĕç промышленность предприятийĕсен тивĕçĕ. Пирĕн республикăра тăхăр апат-çимĕç комбиначĕ çĕрулми тата сухан, кишĕр, купăста типĕтет. Кăçал вĕсен, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут çурă нумайрах çĕрулми типĕтмелле.

Типĕтнĕ çĕрулми пăсăлмасть. Ăна турттарма та çăмăл, мĕншĕн тесен типĕтсен çĕрулми йывăрăшĕ 8—10 хут чакать. 1951 çулта Кувакинăри апат-çимĕç комбиначĕ Апат-çимĕç тата çăмăл промышленность министерствин Цитлионик инженерĕ пулăшнипе, çĕрулмине типĕтмелли çĕнĕ меслет шухăшласа кăларчĕ. Çав меслет тăрăх лайăх çуса тасатнă çĕрулмине вĕрекен шывра пăртак çемçелме тытăничченех пĕçерсе тасатаççĕ. Ун хыççăн ăна мясорубка витĕр кăлараççĕ. Унтан кăларнă çĕрулми вермишель евĕрлĕ пулать. Ăна сушилкăра типĕтеççĕ. Çавăн пек типĕтнĕ çĕрулмине ĕççыннисем уйрăмах кăмăллăн туянаççĕ.

Халиччен апат-çимĕç комбиначĕсенче çĕрулмине тата пахча çимĕçе çуса тасатас тата касса турас ĕçе алăпа тунă. Кăçал Вăрнарти тата Калининăри апат-çимĕç комбиначĕсенче çак ĕçе механизацилеççĕ, çав тĕлĕшпе тивĕçлĕ оборудовани туяннă. Механизмсемпе усă курни ĕç тухăçлăхне 5—7 хут ӳстерме, ĕçе хăвăртлатма, санитари условийĕсене лайăхлатма, продукцин хăйне ларакан хакне чылай йӳнетме пулăшать.

Продукци пахалăхĕ сушилкăсенче технологи процесне тĕрĕс йĕркеленинчен нумай килет. 1952 çулта Калининăри апат-çимĕç комбиначĕнче сушилкăна çĕнетсе лайăхлатнă. Унччен пĕр тонна типĕтнĕ çĕрулми пусне 20-шер кубометр вутă çунтарса пĕтернĕ пулсан, халĕ 8—10-шар кубометр çеç пĕтереççĕ. Çĕнĕ сушилка продукци пахалăхне лайăхлатма та май туса панă. Сăмах майĕн çак комбинат коллективĕн пуçарулăхне палăртас пулать. Вăл производство планне пур кăтартусем тăрăх та тăтăшах тултарса пырать. Кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕç итогĕсем тăрăх вăл Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăваш облпрофсовечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Калининăри апат-çимĕç комбиначĕн опычĕпе ытти комбинатсенче те усă кураççĕ. Халĕ Вăрнарти апат-çимĕç комбиначĕнче сушилкăна çĕнетсе лайăхлатаççĕ.

Апат-çимĕç промышленность предприятийĕсен çĕрулмипе пахча çимĕç йышăнма тата вĕсене типĕтме хăвăртрах хатĕрленсе çитмелле. Овощехранилищĕсене тата вĕсем патне пымалли çулсене, оборудование, сушилкăсене, савăт-сапана, тарасене пурне те пысăк пахалăхпа юсаттармалла, кадрсем вĕрентсе хатĕрлемелле.

Кăçал колхозсен уй-хирĕсенче тухăçлă çĕрулми тата пахча çимĕç ӳссе çитĕнет. Апат-çимĕç комбиначĕсен колхозсемпе тачă сыхăну тытмалла; çĕрулмипе пахча çимĕçе пĕр чăрмавсăр йышăнмалла тумалла.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине малалла аталантарни, çĕнĕрен те çĕнĕ продуктсем туса кăларни, вĕсен пахалăхне лайăхлатни ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерме пулăшать. Çакна апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен яланах асра тытмалла. Магазинсемпе столовăйсенче варени, повидло, çырла шывĕ, тăварланă, типĕтнĕ тата маринованнăй кăмпа хĕлĕнсăвĕн çителĕклĕ пултăр.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ апат-çимĕç промышленноçне хăвăрт аталантарма, пахча çимĕç типĕтекен заводсем нумай туса лартма, апат-çимĕç продукчĕсен пахалăхне лайăхлатма, вĕсен ассортиментне нумайлатма палăртрĕ.

Республикăри апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем съезд решенийĕсене чыслăн пурнăçлассишĕн вăйа шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Чăваш АССР Апат-çимĕç тата çăмăл промышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисем продукци туса кăлармалли çур çулхи плана ăнăçлă тултарчĕç. Ĕççыннисене макарон, çăкăрпа булка, кондитерски изделисем планран ирттерсе чылай панă. Предприятисенче çулталăкри плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн, чĕртавар перекетлессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессишĕн социализмла ăмăрту сарăлса пырать.

Райсовет исполкомĕсемпе хула Совет исполкомĕсен апат-çимĕç комбиначĕсен ĕçĕпе куллен интересленмелле, вĕсене чĕртавар çителĕклĕ хатĕрлеме пулăшмалла.

В. ПЕРОВ,
Чăваш АССР Апат-çимĕç тата çăмăл промышленность министерствин производствăпа техника пайĕн начальникĕ.

Тĕнчери лару-тăру

АМЕРИКĂН ХУШСА ТАТА ХĂРАТСА ТĂРАС ПОЛИТИКИ ПУТЛАНСА ЛАРАТЬ

США-н влаçра тăракан ушкăнĕсем «Европа çарĕ» текенскерне тума тăрăшнине Хĕвеланăç Европăри халăхсем хăйсен çĕршывĕсен мирлĕ пурнăçĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратни пулать тесе шутлаççĕ, çавăн пек çар тăвассине хирĕç хытăрах та хытăрах кĕрешеççĕ. Шăпах та çавăн пек хирĕç тăнине пула, «Европа çарĕ» çинчен тунă договора çаплах çирĕплетмен-ха. Договор тума ултă çĕршыв хутшăннă пулсан, пĕр çĕршыв—Хĕвеланăç Германи кăна, тĕрĕсрех каласан—Бонри шайкка çеç çав договора çирĕплетнĕ. Вашингтонран хытă хĕсеççĕ пулин те, Францире, Италире, Бельгире, Голландире тата Люксембургра влаçра тăракан ушкăнсем халĕ те çав договора çирĕплетме, Аденауэр хыççăн кайма шикленсе тăраççĕ.

Пĕрлешӳллĕ Штатсем юлашки вăхăтра Голланди çине тимлĕ пăхаççĕ, вĕсем Голланди парламенчĕ ĕçе «пуçарса» ярассине, вăл «Европа çарне» тăвассине йывăрлăхран кăларас ĕçе хавхалантаракане пулассине шанаççĕ. Голландире кашни эрнере тухакан «Гаагше пост» хаçат çак кунсенче акă мĕнле хыпар пĕлтернĕ: Голланди правительстви хăйĕн Вашингтонри посолĕ урлă США государство департаменчĕн директивине илнĕ, унта договора хăвăртрах çирĕплетме хушнă, мĕншĕн тесен «çак фактпа Америка çĕршывĕри тата тулашри ĕçсенче лайăх усă курма пултарать», тесе каланă. США хăй енчен Голландие договора çирĕплетнĕшĕн «парне» пама пулнă.

Америкăри правительсем хăйсен тĕллевĕсене пурнăçлас шутпа çĕнĕрен пĕрре хĕсес, тепре—илĕртес политика тытса пыни палăрать. Ку енĕпе, сăмахран, уйрăмах Америкăн пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхне хӳтĕлемелли программи палăрса тăрать. Ансăртран мар ĕнтĕ асăннă программăн условийĕсем çакăн пек: Америка сенаторĕ Джонсон каланă тăрăх, çак условисем США президентне ĕç тунă чухне «хăйне мĕн кирлине тутарма çине тăма», Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчен хăшĕ те пулин çар договорĕсене çирĕплетессине вăраха ярас-мĕн пулсан, çав çĕршыв пирки «питĕ çирĕп позици» йышăнма май парать. Кунта Даллес Европăна кайса çӳренине тата вăл ыйтăва ультиматум пекех лартса: е эсир «Европа çарне» тумалли договора алă пусатăр, е сирĕн çĕршывсене Америка «пулăшу пама» чарăнать, тесе каланине аса илни вырăнлă.

Анчах фактсенчен Америкăн хушса тăрас политики ăнăçсăр пулни курăнать. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Парижри корреспонденчĕ пĕлтернинчен çакă паллă: Франци парламентĕнчи договора çирĕплетесшĕн тăракан çынсем те «ăна Наци пухăвĕнче çирĕплеттерме шанчăк пачах çук» тесе шутлаççĕ.

Итали, Бельги тата Голланди парламенчĕсенче те договора çирĕплетессине хирĕç вăйлă тăраççĕ. Бельгире политикăлла паллă деятельсем, çав шутра сенат председателĕ Стрюйе хăй те, договора хирĕç пулни çинчен каланă. «Договора йышăнни Бельгие тата ытти пĕчĕк çĕршывсене сиен кӳрет тата Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклеме чармасть», тенĕ вăл. Çаксем вĕсем пурте—договора хирĕç Хĕвеланăç Европăри ĕççыннисен чи анлă массисем активлă кĕрешнин результачĕсем.

Америкăн çар ĕçне ертсе пыраканĕсем, вăрçăшăн тăракан çыннисен Хĕвеланăç Европăри халăхсене Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем енчен хăрушлăх килме пултарать, тесе хăратма хăтланаççĕ. Анчах çав маневрсем ăнăçсăр пулаççĕ. Америкăн буржуази майлă тăракан паллă обозревателĕ Липпман «Европа çарне» тăвас тата васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлес шухăша Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче ырламаннине палăртать. «Çав проектсем тымартанах типсе ларчĕç, мĕншĕн тесен вĕсем ӳсмелли сĕткен—вăрçăпа танăшассинчен хăратса тăрасси—пĕтрĕ», тесе çырать Липпман.

«Эпир урăх çĕршывсенче миллиардшар доллар пĕтеретпĕр, анчах мĕншĕн-ха пире хамăрăн союзниксем те юратмаççĕ», тесе тĕлĕнсе ыйту панă нумай пулмасть Америкăри «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат. Çак ыйтăва хирĕç ответлеме, паллах, йывăр мар: Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчи тата США-на пăхăнса тăракан ытти çĕршывсенчи халăхсем США тытса пыракан политика вĕсен никама пăхăнманлăхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери миршĕн хăрушлăх пулса тăнине кураççĕ.

ИТАЛИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНĂ ПИРКИ

Италире чылай вăхăт хушши правительство тăваймарĕç. Çĕнĕ правительствăна июлĕн 15-мĕшĕнче çеç уйăрса лартрĕç. Çак правительствăри çынсем пурте пĕр партире тăраççĕ. Правительство пуçлăхĕ—де Гаспери. Çĕнĕ правительствăн членĕсем пурте—христианла демократсен партийĕн представителĕсем. Ку парти, пилĕк çул хушши влаçра тăрса, яланах Итали халăхĕн анлă массисем сивленĕ политикăна тытса пынă.

Кăçалхи июнĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче парламент суйлавĕ вăхăтĕнче реакциллĕ партисен христианла демократсем ертсе пыракан блокĕ поражени тӳснине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çак блок суйлавра сасăсен çуррине пухайман, çавна пула ултавлă ĕçсем тума май паракан суйлав законĕ вăй илеймен. Унччен Италири реакци çав закон пулăшнипе суйлавра çĕнтерессе шаннă пулнă. Çав закон тăрăх, парти е партисен блокĕ, суйлавра сасăсенчен, 50 процентне е унтан пĕр процент та пулин ытларах илсен, депутатсен палатинчи мандатсенчен 65 процентне илме пултарать. Влаçра тăракан реакциллĕ блок, хăйĕн майлă тăракансем халăх хушшинче сахал пулнă çĕртех, çав закон пулăшнипе парламентра хăйĕн представителĕсем ытларах пулмалла тума тăрăшнă, анчах унăн ĕмĕчĕ путланса ларнă.

Парламентри вырăнсене кашни парти мĕн чухлĕ сасă илнĕ тăрăх пайланă, çавна пула христианла демократсемпе вĕсен малтанхи союзникĕсен позицийĕ нумай вăйсăрланса юлнă.

Суйлав результачĕсем Италире çĕнĕ лару-тăру пулса тăнине кăтартса пачĕç. Христианла демократсем поражени тӳсни вĕсен политики—Италин наци интересĕсене Америка монополийĕсене пăхăнтарас, халăхăн демократиллĕ прависене пĕтерсе хурас политика поражени тӳснине пĕлтерет. Сулахайри, демократиллĕ партисем çĕнтерни çакна кăтартса пачĕ: суйлавçăсен анлă массисем коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕ тытса пыракан политика—Италин наци суверенитетне тата халăх массисен экономикăлла тата политикăлла интересĕсене хӳтĕлес политика тавра тачă пĕтĕçсе пыраççĕ.

Анчах Италире суйлавсем хыççăн пуçланса кайнă событисем христианла демократсемпе вĕсен лидерĕ де Гаспери суйлавçăсем вĕсене поражени тӳстерниçчен тĕрĕс вывод тума нимĕн чухлĕ те пултарайманнине кăтартса параççĕ. Суйлав хыççăнхи вăхăтра, уйрăмах июлĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа, де Гасперие парламентри çирĕп ытларахăшĕ çине таянакан коалици тăвас пирки партисен лидерĕсемпе канашлама хушнă кунтанпа, христианла демократсемпе вĕсен малтанхи союзникĕсем тĕрлĕ маневрсем туса хăтланчĕç. Çав пĕтĕм маневрсен тĕллевĕ демократиллĕ блока аркатасси, социалистсене коммунистсенчен уйăрасси, коммунистсене нациллĕ политикăна ертсе пырас ĕçрен сиресси пулнă. Коммунистсен партийĕн руководстви çав маневрсем путланса ларассине малтанах пĕлсе тăнă, чăннипе вара кĕтнĕ пекех пулса тухнă. Суйлав иртсенех, Италири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ хăйĕн резолюцийĕнче çакна палăртнă: «парламентри хальхи пек лару-тăрура политикăлла тĕрлĕ вăйсем пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх кăна çирĕп правительство туса хума пулать» тата «çавăн пек калаçса татăлмалли майсене шыранă чухне халăх чăннипе мĕн тăвасшăн пулнине тата нумай миллионшар суйлавçăсем мĕн шухăшланине шута илмесĕр тăма çук, вĕсем мирлĕ пурнăç тата социальнăй реформăсем тумалли çĕнĕ политика пурнăçлама ыйтса, хăйсен сассисене коммунистсен тата социалистсен партийĕсене пачĕç».

Де Гаспери пĕр парти членĕсенчен—христианла демократсенчен тăракан правительство туса хуни хальхи лару-тăрури йывăрлăхран тухнине пĕлтермест. Çавăн пек правительствăн парламентра та, суйлавçăсен анлă массисем хушшинче те çирĕп тĕрек тата шанчăклă ытларахăшĕ пулма пултараймасть. Италири «Аванти» хаçат çапла çырнă: çĕнĕ правительство вăл—«тĕрлĕ йышши вăйсен ушкăнĕ, çав вăйсене влаçшăн хапсăнни тата нациллĕ проблемăсене демократиллĕ майпа татса парассинчен хăрани пĕрлештерсе тăрать».

США ИСПАНИРЕ МĔН ТУМА ШУТЛАТЬ

Сенатăн укçа уйăрса парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕнче нумай пулмасть США государство секретарĕ Даллес сăмах туса каланă. Испанипе унăн тинĕс-çар тата сывлăш-çарĕ базисене Пĕрлешӳллĕ Штатсен аллине парасси çинчен килĕшӳ тусанах, Франко Америкăран «пулăшу» илессине тата «пĕр-пĕрне хӳтĕлемелли программăна» пурнăçлама хутшăнассине шанса тăма пултарать, тенĕ вăл.

Урăх çĕршывсенчи хаçатсенче пичетленнĕ хыпарсенчен Америкăн влаçра тăракан ушкăнĕсем Испание хăвăртрах агрессиллĕ Атлантика блокне кĕртме тăрăшни курăнать. Швецири «Сюдсвенске дагбладет» хаçатăн корреспонденчĕ, хăй Испанире курса çӳрени çинчен çырса, çакна пĕлтерет: Мадридри политикăлла ĕçри çынсем уççăнах каланă тăрăх, Америкăн дипломачĕсемпе çар çыннисем Хĕвеланăç Германипе Испани пĕр-пĕрин хушшинче договорсем тăвассине шанаççĕ, çапла вара «асăннă çĕршывсенче майĕпен ку чухнехи çарсем тума май килĕ», тесе шутлаççĕ.

Америка сенаторĕ Спаркмен пĕр вăхăтра Испанире пулнă. Вăл шутласа пĕлнĕ тăрăх, Испани сахалтан та икĕ миллион çынлă çар пухса хатĕрлеме пултарать. Çакă, паллах ĕнтĕ, Америкăн çар ĕçне ертсе пыраканĕсене, вăрçăшăн тăракансене, питех те хытă илĕртет. Анчах ĕç çар тума пултарнинче кăна мар. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Испание, унăн çар базисемпе пĕрле, Хĕвеланăç Европăри стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан çĕршыв, тесе шутлаççĕ.

Базăсем панăшăн Пĕрлешӳллĕ Штатсем Франкона, «пулăшу» парас шутпа, 225 миллион доллар пама пулаççĕ. Фашистла диктатор çавăн пек килĕшӳ тăвассине хирĕç мар, анчах вăл укçа ытларах илесшĕн. Ют çĕршывсенчи хаçатсем, çав шутра Америкăри хаçатсем те çапла çыраççĕ: Франко долларсем ытларах илес пирки çине тăма шутлать, çавна пула Америкăпа Испани хушшинчи калаçусем вăраха тăсăлаççĕ.

Çар ĕçĕ тĕлĕшпе килĕшӳ туса алă пуснипе Америка монополисчĕсем Испани экономикинче тата ытларах çирĕпленме шутлаççĕ. Кун çинчен нумай пулмасть США-н Мадридри посолĕ Данн уççăнах каласа панă. Килĕшӳ Америкăри хуçасене хăйсен капиталне Испание ытларах хывма çул уçса парассине Америка дипломачĕ шанса тăрать.

США-н влаçра тăракан ушкăнĕсем тахçантанпах ĕнтĕ франкистла Испание хăйсен союзникĕ вырăнне хураççĕ. Вĕсем Испани территорийĕнчен стратегиллĕ плацдарм туса хурасшăн, Испани халăхĕнчен вăрçăра вилсе пĕтмелли салтаксем тăвасшăн. Вĕсем Испани территорийĕнчен Америка монополисчĕсем пуймалли вырăн туса хурасшăн.

Д. БОЧАРОВ.

Демократиллĕ Германи Республики правительствин çĕнĕвĕ пирки Отто Нушке калани

БЕРЛИН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейе цейт» хаçат христианла демократсен союзĕн председателĕ, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕн заместителĕ Отто Нушке каланине пичетленĕ. Вăл Демократиллĕ Германи Республикин правительстви пĕр тăхтаса тăмасăрах пĕтĕм Германи канашлăвне пухма сĕннĕ пирки каланă.

Демократиллĕ Германи Республикин Министрсен Совечĕ, тенĕ Отто Нушке, 1953 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче пирĕн пĕтĕм халăха хумхантаракан ыйту—демократиллĕ тата мирлĕ никĕс çинче Германие çĕнĕрен пĕр çĕршыв туса хурас ыйту пирки хăйĕн шухăшне тепĕр хут каласа пачĕ.

Американецсемпе Аденауэр Германи ыйтăвне мирлĕн йĕркелеме чăрмантарнине палăртса, Отто Нушке çапла каланă:

Нимĕç халăхĕн ытларахăшĕ пĕрлĕхлĕ, мирлĕ, демократиллĕ Германи тата мир тăвасшăн.

Министрсен Совечĕн заявленийĕ пĕтĕм Германи халăхĕн çав ирĕкне çĕнĕрен палăртать, çавăнпа вăл питĕ кирлĕ тата паха, вăл пĕрлĕхлĕ тата демократиллĕ Германишĕн кĕрешекенсене çĕнĕрен пулăшу пани пулса тăрать.

Пăлхав тунипе Германие пĕрлештерме май çук, ăна нимĕçсем хăйсем калаçса татăлнипе тата тăватă аслă держава килĕшӳ тунипе çеç пĕрлештерме пулать, кун пирки иккĕленмелли нимĕн те çук, тенĕ Отто Нушке.

Аденауэр хăйĕн Корейăри тусĕ пек, Ли Сын Ман пек, нимĕçсем хушшинче килĕшӳ тума чăрмантарма тăрăшать пулсан, пĕтĕм Германири мире юрататакан çынсем, мирлĕ договор тума тата оккупаци çарĕсене пурне те Германирен илсе каймалла тума ыйтакан çынсем, хăйсем мĕн каланине итлеттерĕç, тесе эпир шанса тăратпăр.

Отто Нушке çакна палăртнă: Совет Союзĕн шухăшĕпе—хальхи вăхăтра тĕнчере мирлĕ йĕркепе татса пама май килмен тавлашуллă ыйтусем çук тенипе кашни нимĕç патриот килĕшет.

Румынире халăх хуçалăхĕ вăйланать

БУХАРЕСТ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паянхи хаçатсем çинче Румыни Халăх Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвне пичетленĕ. Çав пĕлтерӳре Румыни халăх хуçалăхне 1953 çулхи иккĕмĕш кварталта аталантармалли государство планĕ мĕнле пурнăçланни çинчен каланă.

1953 çулхи иккĕмĕш кварталти плана мĕнпур продукци туса кăларас енĕпе 101,1 процент тултарнă.

1953 çулхи иккĕмĕш кварталта социализмла пĕтĕм промышленноçăн продукцийĕ, пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 19,1 процент ӳснĕ.

1953 çулăн пĕррĕмĕш çурçуллăхĕнче капитальнăй строительствăсен калăпăшĕ, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 39,9 процент ӳснĕ.

Ваккăн суту-илӳ тумалли плана социализмла сектор енĕпе 1953 çулхи иккĕмĕш кварталта 100,3 процент тултарнă. Аш-какай, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ тата сахăр сутмалли план тулман.

Федерик Жолио-Кюри Çамрăксемпе студентсен Пĕтĕм тĕнчери фестивальне пухăнакансем патне янă çыру

БУХАРЕСТ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бухарестри хаçатсем çинче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Федерик Жолио-Кюри Çамрăксемпе студентсен мирпе туслăхшăн кĕрешес ыйтупа пухăнакан пĕтĕм тĕнчери тăваттăмĕш фестивалĕн участникĕсем патне янă çыру пичетленсе тухнă.

Эсир хăвăр шухăшусене тата опыта пĕр-пĕрне каласа парсан, тенĕ çырура, сирĕн спорт тата культура коллективĕсем ăмăртусенче тĕл пулсан, эсир этемлĕхе ахаль шанчăкран ытларах паратăр, ăна халăхсем хушшинчи тăванлăхпа туслăхăн примерне кăтартатăр. Эсир тăрăшнине пула илемлĕ хула икĕ эрне хушши çамрăксен, туслăхпа мирĕн столици пулса тăрать.

Эсир киле, хăвăр халăхсем патне тата килĕрсене таврăнсан, унта та мир идейисене хӳтĕлĕр, хăвăр кăтартнă примера анлă сарăр. Çапла вара эсир халăхсем пĕр-пĕринпе лайăх килĕштерсе тата туслă пурăнма тивĕçлине, апла пулсан, пĕтĕм тĕнчери мĕнпур хирĕçӳсене калаçусем иртгернипе татса пама май пуррине кăтартса парăр.

Çав пархатарлă идейăна пурнăçлакансем пулса тăрса, тенĕ малалла çырура, эсир пирĕн вăхăтри чи пысăк юхăма — пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракан çĕршер миллион çынсен организациленнĕ тата пĕрлĕхлĕ юхăмне хутшăнатăр. Çапла майпа мире сыхласа хăварма пулăшса, эсир хăвăра тивĕçлĕ правăсене хӳтĕлетĕр, çав правăсене пысăклатмалли майсене хӳтĕлетĕр. Эсир малашлăхшăн кĕрешетĕр. Эсир пурнăç çĕнтерессине ĕçе кĕртсе пыратăр.

Çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне Польшăран каякан делегаци

ВАРШАВА, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен Бухарестра пулмалли виççĕмĕш конгресне делегаци ярасси çинчен сӳтсе явса, Польшăри çамрăксен союзĕн главнăй правленийĕ резолюци йышăннă. Резолюцире пулас конгресс çамрăксем миршĕн, государствăсем тĕнчери тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа йĕркелессишĕн кĕрешес ĕçре политикăлла пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

«Польшăри çамрăксем,—тенĕ резолюцире,—çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне пухнине хĕрӳллĕн ырлаççĕ, çакăн çинчен вĕсем конгреса хутшăнма тата пĕтĕм тĕнчери çамрăксемпе студентсен тăваттăмĕш фестивальне хутшăнма тимлĕн хатĕрленни калать».

Польшăри çамрăксен союзĕн главнăй правленийĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне делегаци яма йышăннă, делегацире 20 çын.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерне: иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те пысăк мар çапăçусем пулнă.

Паян халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиен кӳнĕ.

ПХЕНЬЯН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Йоньчхоньрен хĕвеланăçнерехре тата фронтăн Синмоктонпа Тындерли хушшинчи участокĕнче халăх çарĕсемпе тăшман хушшинче вăйлă çапăçусем пулнă.

Халăх çарĕсен зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ, 4 самолетне сиен кӳнĕ.

Ли Сын Манăн США-ри агенчĕн агрессиллĕ заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сан-Францискоран пĕлтернĕ тăрăх, Ли Сын Манăн США-ри «посолĕ» Ян Ю Чан хаçатсен представителĕсене çапла каланă: Демократиллĕ Корея Халăх республикин влаçĕсем «вăрçма чарăннăранпа пуçласа 180 кун хушшинче Корейăна пĕрлештерме килĕшмесен», лисынмановецсем тепĕр хут вăрçă пуçлаççĕ, тенĕ.

Корреспондент çапла пĕлтерет:

Ян Ю Чан Сан-Франциско хулине «Коммонуэлс» клубĕн членĕсем умĕнче сăмах туса калама пынă. Вăл унта «çĕнĕрен çапăçма тытăнасси ахалех палăрса тăракан хыпар» пулнине уççăнах ăнланмалла каласа панă. «Вара эпир пĕрлешнĕ нацисем пире сывлăшран тата тинĕс çинчен те пулăшса тăрассине шанатпăр», тенĕ Ян Ю Чан.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх Ли Сын Манпа государство секретарĕн помощникĕ Робертсон нумай пулмасть пулса иртнĕ калаçусем вăхăтĕнче перемири срокĕ пĕтĕмпе 180 кун пулмалла тăвас пирки килĕшӳ тунă-им тесе ыйту парсан, Ян Ю Чан çак ыйту çине ответлеме килĕшмен.

Суэц каналĕ патĕнчи лару-тăру

КАИР, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 16-мĕшĕнче Англин Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ Исмаилире Египет çыннисене ухтарма хушнине пăрахăçлани çинчен пĕлтернĕ. Анчах, Египетăн наци руководстви министерствин официальнăй пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Англи салтакĕсем халĕ те Исмаилире çынсене ухтараççĕ тата киревсĕр ĕçсем тăваççĕ.

Пĕлтерӳре çакна палăртнă: Англи салтакĕсем ухтарнă чухне Египет çыннисене çаратаççĕ. Июлĕн 16-мĕшĕнче Англи салтакĕсем Египетăн виçĕ рабочийĕ çине тапăннă, вĕсене çĕçĕпе чиксе амантнă. Июлĕн 17-мĕшĕнче Англи салтакĕсем Египет çыннине Абдель Монейма йывăр амантнă.

Спорт хыпарĕсем

Иртнĕ вырсарникун республикăри хуласемпе район центрĕсенче тата ялсенче Пĕтĕм Союзри физкультурниксен кунĕ ячĕпе тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем пулчĕç.

Шупашкарта, Улатăрта тата Çĕмĕрлере футбол вăййипе республикăра мала тухассишĕн пыракан ăмăртăвăн черетлĕ вăййисем пулса иртрĕç.

Шупашкарти «Спартак» спорт обществин футбол команди Çĕмĕрлере пулса вырăнти «Красная звезда» спорт обществин футбол командипе тĕл пулса вылянă. Вăйă 3:1 шутпа çĕмĕрлесем çĕнтернипе вĕçленнĕ.

Улатăрта Чапаевски поселокри футбол команди вырăнти «Трактор» спорт обществин командипе вылянă. Вăйă 4:2 шутпа хăнасем çĕнтернипе пĕтнĕ.

Канашра «Локомотив» спорт обществин футбол команди хăйсен стадионĕнче Сергачри «Локомотив» спорт обществин командипе юлташла тĕл пулса вылянă. Хăнасем 7:1 шутпа выляса янă.

* * *

Çак кунсенче футбол вăййипе Шупашкар хулинче мала тухассишĕн пыракан ăмăрту пуçланнă. Ăмăртăва хулари çичĕ команда — «Спартак», «Энергия» спорт обществисен тата Чапаевски поселокри иккĕмĕш командисем, пир-авăр комбинатĕнчи, «Красная звезда», «Искра» тата «Труд» спорт обществисен футбол командисем хутшăнаççĕ.

Иртнĕ вырсарникун «Энергия» спорт обществин стадионĕнче çак ăмăртăвăн черетлĕ вăййи пулчĕ. Пир-авăр комбинатĕнчи футбол команди «Энергия» спорт обществин иккĕмĕш командине 4:2 шутпа выляса ячĕ.

Шупашкарти ипподромра

Июлĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарти ипподромра хăвăрт чупакан лашасен ултăмĕш ăмăртăвĕ пулчĕ. Ăмăртăва 25 лаша хутшăнчĕ. Вĕсене 1.600 метра ăмăртса чуптарчĕç.

1951 çулта çуралнă лашасенчен Чăвашсен государство лаша витинчи «Зыбь» ятлă кĕсре лайăх результат кăтартрĕ. 1.600 метра вăл 2 минут та 54,5 секундра чупса тухрĕ. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри «Соперник» ăйăр финиша унтан 0,7 секунд каярах çитрĕ. Государствăн лаша витинчи «Звучный» ăйăрпа «Запеканка» кĕсре 2 минут та 58,8 секундра тухрĕç, финиша пĕр вăхăтрах çитрĕç.

Старта Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри «Донец» ăйăра, 1950 çулта çуралнăскерне, çав районти «Авангард» колхозри 1948 çулта çуралнă «Дивный клан» ăйăра илсе тухаççĕ. Финиша чи малтан, 2 минут та 35,4 секундра, «Донец» ăйăр çитрĕ. «Дивный клан» ăйăр унтан 0,2 секунд кая юлчĕ. Ку ăйăрсене çак кунхи ăмăртура иккĕмĕш хут чуптарчĕç. Ун чухне «Донец» 2 минут та 34,8 секундра чупса тухрĕ.

1950 çулта çуралнă лашасенчен Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозри «Нептун» ăйăр дистанцие 3 минут та 8,2 секунд, Етĕрне районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри «Удалой» ăйăр 3 минут та 9,8 секунд хушшинче вĕçлерĕç.

Государствăн лаша витинчи «Люцерна» кĕсре те лайăх результат кăтартрĕ. 1.600 метрлă дистанцие вăл 2 минут та 37 секундра вĕçлерĕ. Лаша витинчи «Затейница» кĕсре 2 минут та 45 секундра, Çĕрпӳ районĕнчи «1905 год» колхозри «Перепел» ăйăр 2 минут та 48,5 секундра чупса тухрĕç.

Çитес ăмăрту июлĕн 26-мĕшĕнче пулать.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья.—Профсоюзсен ĕçне лайăхлатса пырар.

Тăван çĕршывра.

Совет стройĕн хăватне тата ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне никам та аркатаймĕ.

П. Николаев.—Тырпул пухса кĕртес ĕç тата районти хаçатсен задачисем.

Л. Агаков.—Библиотекăсем çине тимлĕрех пăхмалла.

Н. Юмжаков, И. Морозов.—Молотилкăпа тухăçлă ĕçлессишĕн.

Н. Шашурин.—Колхоз мĕншĕн кая юлса пырать?

Вырăнти тата урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

ПĔЛТЕРНИ

Паян, июлĕн 21-мĕшĕнче, 18 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека çуртĕнче агитаторсемпе докладчиксем валли инструктивлă доклад пулать. Тема: «ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕн кунĕ». Докладчик—П. Т. Трофимов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Мари АССР-ĕнчи Шкетан ячĕпе тăракан вырăсла драма театрĕн гастролĕсем

Июлĕн 22-мĕшĕнче «Ксения» (4 пайлă пьеса), июлĕн 23-мĕшĕнче «Грушенька» (Лесковăн «Очарованный странник» повеçĕ тăрăх çырнă 4 пайлă драма).

Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—июлĕн 21-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Чапаев».

Китай халăхĕ Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнине палăртать

ПЕКИН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри общественность В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнине анлăн палăртнă. Центрти хаçатсем ĕнер поэтăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Китайри тата Совет Союзĕнчи авторсем çырнă нумай статьясене, Маяковскин «Во весь голос» поэмин сыпăкĕсене пичетленĕ.

«Бэйцзинжибао» хаçатра Маяковские асăнса çырнă «Китай халăхĕн тусĕ» ятлă сăвă пичетленсе тухнă, ăна Пекинри типографийĕнче ĕçлекен рабочи Ли Сюэ-ао çырнă.

Пекинри кĕнеке магазинĕсене китайла куçарса пичетленĕ «Владимир Ильич Ленин» поэмăн кĕнекине малтанхи хут сутма панă.

Ĕнер Пекинра Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнине асăнса савăнăçлă пуху иртгернĕ. Пухăва Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществипе Пĕтĕм Китайри литературăпа искусство работникĕсен пĕрлешĕвĕ организациленĕ. Савăнăçлă пухăва республикăн культура министрĕ Шэнь Янь-бин председатель пулса ертсе пынă. Маяковскин пурнăçĕпе творчестви çинчен тата вăл Китай литературине мĕнле влияни пани çинчен Цао Цзин-хуа профессор тата паллă поэт Юань Шуй-по докладсем тунă. Пухура юлашкинчен Маяковскин «Лучший стих», «Прозаседавшиеся» «Стихи о советском паспорте» сăввисене, «Хорошо» поэмăн сыпăкĕсене китайла вуласа панă.

Пекинра Маяковские асăнса лекцисемпе пухусем иртгернĕ.

КИТАЙРА АВТОМОБИЛЬСЕМ ТĂВАКАН ПĔРРЕМĔШ ЗАВОД ЛАРТАÇÇĔ

ПЕКИН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинче автомобильсем тăвакан пĕрремĕш завод лартма тытăннă. «Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 15-мĕшĕнче завод никĕсне хывнă ятпа уяв пулса иртнĕ. Уявра 10 пин çын пулнă.

Хаçат çырнă тăрăх, çав завода совет автомобилестроенин малта пыракан çитĕнĕвне шута илсе тата Совет Союзĕнче хатĕрленĕ проектсем тăрăх лартаççĕ. Завод Китай Халăх Республикинче автомобиль промышленноçĕн пĕрремĕш предприятийĕ пулать. Завода тума тытăнсан, строительство ĕçĕсене анлăн механизацилесе пыма палăртнă.

30 провинципе хула строительствăра ĕçлеме ăста рабочисем янă. Строительство валли тĕрлĕ материалсемпе машинăсем туса хатĕрлеме çĕршыври 70 предприяти ытла хутшăннă.

Коперника асăнса

ВАРШАВА, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн аслă ученăйĕ Николай Коперник астроном çуралнăранпа кăçал 480 çул тата вăл вилнĕренпе 412 çул тултарать. Çавна май Польшăра 1953 çул «Коперник юбилейĕн çулĕ» пулать, тесе пĕлтернĕ.

Ĕнер Варшавăра государство театрĕнче лару пулнă. Ларăва Польшăри Рабочисен Пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюровĕн членĕсем, государство совечĕпе правительство членĕсем, Польшăри наука академийĕн членĕсем тата дипломати корпусĕн представителĕсем пухăннă. Ларура тата Совет Союзĕн, Китай Халăх Республикин, Венгрин, Чехословакин, Индин, Аргентинăн, Швецин, Кубан, Иранăн, Канадăн тата ытти çĕршывсен представителĕсем пулнă.

Ларăва Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Ю. Циранкевич уçнă. Вăл Польшăн аслă астрономĕ тунă ĕçсен пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен каланă. Н. Коперникăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пĕтĕм тĕнчери астрономсен союзĕн вице-председателĕ, Вроцлав университечĕн профессорĕ Е. Рыбка доклад туса панă. Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕ ячĕпе ларура СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ М. Субботин сăмах туса каланă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

ИТ 00589 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.